ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

44 (4406) №, 2014, юпа, 30 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Юмах вулар та журналпа паллашар!



**Уроксем вĕçленнине систерсе шăнкăрав янăрарĕ. 2 «г» класс вĕренекенĕсем килелле кайма васкамарĕç. Парта хушшинчен тухнă-тухманах юратнă педагогне Валентина Васильевна Францевăна кайăк чĕпписем пек сырса илчĕç.**

– Эпир киле халех каясшăн мар-ха. Сирĕнпе татах пулас килет пирĕн. Атьăр пурте пĕрле юмах вулар! «Тетте» журналăн çĕнĕ кăларăмĕпе паллашар, – терĕ Аня Филимонова йăл кулса.

– Аня тĕрĕс калать. Чăнах, халех киле кайса мĕн тăвас? Эсир халап вуланă вăхăтра эпĕ ӳкерĕп. Килте ирĕккĕн лараймастăп пĕрех. София йăмăкăм альбома та, кăранташсене те туртса илессишĕн ăшталанать. Памасан – макăрать, е эп сисмен чухне çырса хурать. Унран пĕтĕм япалана пытарса та ывăнтăм, пĕрех тупать, – терĕ Айдар Андреев.

– Валентина Васильевна, тепĕр хут тархасласа ыйтатпăр. Эпир сирĕнпе тата кăшт вăхăт пуласшăн, – терĕç ыттисем те педагог куçĕнчен тилмĕрсе пăхнă май.

– Ах, хамăн ачасем пекех туйăнатăр-çке эсир... Кăмăлăрсене хуçас мар апла, – терĕ класс ертӳçи пурин çине те ăшшăн пăхса.

Шупашкарти улттăмĕш шкулта кĕçĕн классене вĕрентет Валентина Васильевна Францева. Ачасене юратнăранах çак профессие суйласа илнĕ вăл.

– Пурнăçа çĕнĕрен пуçлас пулсан та педагогах пулăттăм. Аннен йăмăкĕ, Лиза аппа, учительте ĕçлетчĕ. Вăл хĕрлĕ пастăпа тетрадь тĕрĕслесе ларнине курсан ун çумне сухăр пек çыпçăнаттăм. Ӳсерехпе çак ĕçе мана та шанса паракан пулчĕ. Мĕн тери хĕпĕртеттĕм! Утса мар, вĕçсе çӳреттĕм шкулта. Педагогсем çине ăмсанса пăхаттăм: «Эпĕ те сирĕн пекех шкулта ĕçлеме пуçăнăп кĕçех. Ах, вăхăчĕ хăвăртрах шутăрччĕ çеç», – тесе тăтăш хăпартланаттăм. Ĕмĕтленни ахаль пулмарĕ, акă паян эпĕ те Лиза аппа пекех тетрадьсене хĕрлĕ пастăпа тĕрĕслекен педагог, – йăл кулчĕ Валентина Васильевна кăмăллăн.

Хастар педагог пушă вăхăтра ачасене ăса вĕрентмелли сăвă-калав шăрçалать. Хăшĕ-пĕри «Теттере» кун çути курчĕ те ĕнтĕ.

– Журнала пĕчĕкскерсем çав тери юратаççĕ. Çавăнпа эпир унпа тачă çыхăну тытатпăр. Унта хăйсен ӳкерчĕкĕсем пичетленни те хавхалантарать вĕсене. Вĕренӳре те ӳсĕмсем тума пулăшать, – тет Валентина Васильевна.

*Элиза ВАЛАНС.*

Шупашкар,
6-мĕш шкул.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

### Çырăнтару 2015

«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2015 çулăн пĕрремĕш çурри валли Раççей почтин кашни уйрăмĕнче, «Чăваш пичечĕн», «Советская Чувашия» хаçат киоскĕсенче тата редакцире çырăнтараççĕ.

Тантăш

Тетте
Игрушка

Самант

кăларăмсене пур çемье те çырăнасса, ача-пăчапа çамрăксем кăна мар, аслисем те юратса вуласса шанатпăр. Çырăнăр! Васкăр: çырăнтару вăхăчĕ куллен чакса пырать!

# Савăнтарар кăмăлтан

## Ăшă саламсем

***Çывăх çынсене, юлташсене е юратнă вĕрентекенсене хаваслă кăмăл парнелес тесен нумай та кирлĕ мар – çуралнă кунпа е ытти уяв ячĕпе «Тантăша» ăшă салам вĕçтермелле çеç. Хаçата алла тытсанах хăйне саламланине курма кашнинех мĕн тери кăмăллă! Ырă сунса шăрçаланă йĕркесене телефонпа 89051975911, 89876741833 номерсем çине е редакцие çырупа ăсатăр. Электрон адреспа (tantas@list.ru) та яма пултаратăр.***




Самар тăрăхĕнчи Шунтал районĕн Аксаку ялĕнче пурăнакан **Елена Назаровăна** 16 çул тултарнă ятпа саламлатăп.



Çут телей сунатăп эп сана,
Турă сывлăх патăр ытларах.
Сăн-питри илемлĕ куллуна
Пирĕн асăрхасчĕ яланах!
Чĕрӳнте сан – юрату юрри.
Пурнăç савăнтартăр кунсерен.
Мĕн тери телей-çке – эс пурри!
Ыррине сунатăп чĕререн.

*Чи ăшă салампа йăмăкĕ Анастасия Назарова.*

✢ ✢ ✢

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕнĕ Атикасси шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен **Вика Калашниковăна** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, пысăк та сутă телей сунатпăр.



Вĕренӳре ăнăçса пытăр! Яланах çакăн пек ырă кăмăллă тата илемлĕ пул, Вика!

*Пĕрле вĕренекенсем.*

✢ ✢ ✢

Юратнă аттене, кукаçине, Çĕмĕрле районĕн Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Александр Васильевич Козлова** çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, çемьере килĕшӳ сунатпăр. Эсĕ пуррипе эпир савăнатпăр, мухтанатпăр. Пире йывăр вăхăтра пулăшнăшăн, хавхалантарнăшăн тав сăмахĕ калатпăр.

*Салампа мăнукĕсем, мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕсем, кинĕпе кĕрӳшĕсем тата ытти тăванĕсем.*

✢ ✢ ✢

Юратнă аттепе аннене **Сергей Валентиновичпа Наталия Николаевна Васильевсене** мерчен туй ячĕпе саламлатпăр. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, юратса, пире савăнтарса нумай-нумай çул пурăнăр. Эпир сире питĕ юрататпăр!

*Ывăлĕ Женя, хĕрĕсем Ольăпа Марина тата кĕрӳшĕ Женя.*

Тутарстан,
Чистай районĕ,
Анат Катрата.

✢ ✢ ✢

Тутарстан Республикинчи Чистай районĕнчи Анат Катрата ялĕнче пурăнакан чи çывăх та хаклă юлташăмăра **Надежда Григорьевăна** çуралнă кун ячĕпе ăшшăн



саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, ĕçре ăнăçу сунатпăр. Пурнăçри кашни утăму ырлăхпа, юратупа, сутă ĕмĕтпе тултăр!

*Ырă сунса çывăх юлташĕсем Марина тата Женя.*

## СПОРТ



# Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр

## Нумаях пулмасть республикăра «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» ăмăрту иртрĕ.

Ачасене пĕчĕкренех спортпа туслă пулма вĕрентни питĕ усăллă. Ӳсĕм патне ăнтăлма, тăрăшулăха çамрăкранах хăнăхма, пуçарулăха аталантарма пĕлмелле. Çак ăмăртăва хутшăнакансем маттур та хастар ачасем. Виççĕмĕш пусмана çиччĕрен пуçласа вун икĕ, тăваттăмĕшне вун иккĕрен тытăнса вун пилĕк çулхи ачасем кĕреççĕ. Командăра пурĕ сакăр ача.

– Питĕ кирлĕ çакăн пек ăмăртусем, кăмăллă тупăшусем. Хамăр ачасемшĕн савăнатăп, вĕсемпе мухтанатăп, – пĕлтерет Муркаш шкулĕнче вĕренекенсен тренерĕ Сергей Дмитриевич Паладьев.

Паллах, мухтанмалла çакăн пек ачасемпе. Анжела Федорова пĕрремĕш класранах спортпа туслă. Хăвăрт утасси те, чупасси те, йĕлтĕрпе ярăнасси те – унăн чун киленĕçĕ. Нумаях пулмасть ишессипе те малти вырăнсене туха пуçларĕ.

– Мана çакăн пек ăмăртусем килĕшеççĕ. Хамăр районта та эпир ГТО нормативĕсене пурнăçларăмăр. Тăватă команда хушшинче эпир пĕрремĕш вырăн çĕнсе илтĕмĕр. Манăн паянхи çитĕнӳсем пурте тенĕ пекех ылтăн медаль шайĕнче, – каласа парать хĕпĕртенĕ Анжела.

Инçĕшне сикессипе тантăшĕсем хушшинче Карина Филиппова рекорд лартрĕ. Вăл та, тен, хăйне спортсмента курать пуль. Анчах кунта чи пахи – сывлăха спорта çирĕплетни.

– Эпĕ виççĕмĕш класра чухне ишевçĕсен секцине çӳреме пуçларăм. Пĕрремĕш хут Çĕнĕ Шупашкарти акватлон ăмăртăвĕнче иккĕмĕш вырăн çĕнсе илтĕм, çавăнтан пуçланчĕ ĕнтĕ манăн «карьера», – тет хаваслă хĕр ача.

– Эпĕ пионерболла выляма юрататăп, – тет командăри тепĕр каччă. – ГТО нормативĕсене пурнăçлани, ман шутпа, çара каймалли йĕкĕтсемшĕн питĕ усăллă. Вĕсем хĕсметри йывăрлăхсене çăмăллăн çĕнтерĕç тесе шутлатăп, – тет Александр Игнатьев.

Пĕтĕмĕшле сакăр команда хушшинче çĕнтерӳçĕсем çаксем пулчĕç: 1-мĕш – Çĕнĕ Шупашкар, 2-мĕш – Çĕрпӳ шкулĕ, 3-мĕш – Муркашри пĕрремĕш шкул. Вĕсем кубока тивĕçрĕç. Малти вырăн йышăнакансене дипломпа тата медальпе чысларĕç. Малашлăхра та ăнăçу сунчĕç маттурсене.

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***


Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1693 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4162
Пичете юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Пӗри тепринчен МАТТУР

**Елчӗк районӗнчи Аслӑ Пӑла Тимешри таса та хӑтлӑ шкулта ырӑ кӑмӑллӑ вӗренекенсем ачасене кирлӗ пӗлӳ парассишӗн чунтан тӑрӑшаҫҫӗ. Телейпе ҫиҫекен куҫлӑ вӗренекенсем вара ҫутӑ малашлӑх пирки ӗмӗтленеҫҫӗ, хӑйсен умне ҫирӗп тӗллевсем лартса вӗсене пурнӑҫлаҫҫӗ. Шкулти мероприятисене те хаваспах хутшӑнаҫҫӗ. Спортра, вӗренӳре, пултарулӑхра та хастар.**



## «Кӗтменлӗхре ҫухалса каймалла мар»

Тӑххӑрмӗш класра вӗренекен Федя Диомидов шкулти «Юман» футбол командин капитанӗ. Тантӑшӗсем ҫирӗп чунлӑ та тӳрӗ кӑмӑллӑскере пӗр иккӗленмесӗрех ҫак тивӗҫе пурнӑҫлама суйланӑ. Вӑл вӑйӑ вӑрттӑнлӑхӗсене те, ку е вӑл командӑпа еплерех вылямаллине те лайӑх пӗлет.

– Вӑйӑ вӑхӑтӗнче кӗтменлӗхсем, тӗрлӗ лару-тӑру сиксе тухма пултараҫҫӗ. Кун пек чухне вара ҫухалса каймалла мар. Вылякансене хавхалантарма, кирлӗ пулсан кӑштах вӑрҫма та пӗлмелле, – тет Федя татӑклӑн. Чӑн-чӑн салтак тейӗн унӑн ҫирӗп сӑмахӗсене итлесен.

Унӑн пуҫарулӑхне тата ыттисене хавхалантарнине пула кӑҫал районти ӑмӑртусенчен пилӗк хут ҫӗнтерӳпе таврӑннӑ вӗсен команди. Кубоксемпе медальсем чылай ҫӗнсе илнӗ. Республика ӑмӑртӑвӗнче те пулса курнӑ «Юман». Унтан вара иккӗмӗш вырӑн йышӑнса килнӗ. Маттурсем!

Малашнехи пурнӑҫне те Федя футболпа ҫыхӑнтарасшӑн. Тӑххӑрмӗш класс хыҫҫӑн Шупашкарти «Омон» клубра выляма ӗмӗтленет вӑл.

Халӗ унӑн тӗп тӗллевӗ – экзаменсене лайӑх тытасси. Хастарскере ку питех пӑшӑрхантармасть пулин те тӑтӑшах шухӑшлаттарать. Ҫавӑнпа вӑл нумай вулама, тӗрлӗ конкурса, конференцисене хутшӑнма тӑрӑшать. Нимӗҫ чӗлхипе тата ытти чылай предметпа кашни ҫулах олимпиадӑсенче палӑрать. Математика предмечӗпе иртекен наукӑпа практика конференцийӗсенче малти вырӑнсем ҫеҫ йышӑнать. Пултарулӑх конкурсӗсенче те самай ҫитӗнӳ тунӑ вӑл. Акӑ пӗлтӗр районта сӑвӑ илемлӗ вуласа иккӗмӗш вырӑна тухма пултарнӑ. «Тӑван чӗлхе» сӑвва чунтан каласа тӳресене тыткӑнланӑ.

Пур енӗпе те аталанма тӗллев лартнӑскер «Тантӑш» вулаканӗсене те спортпа туслӑ пулма, нумай вулама сӗнет.

## Юрӑ-ташӑра та, спортра та хастар

– Вӑл пур мероприятие те хастар хутшӑнать. Лайӑх ертӳҫӗ те. Сасси усӑ унӑн. Юрлама, ташлама ӑста. Пьесӑри пӗр-пӗр роле те хаваспах вылять. Пур енӗпе те талантлӑ хӗр ача вӑл, – тет ун пирки Антонина Николаевна Михеева, чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен.

Чӑнах та, саккӑрмӗш класра ӑс пухакан Даша Осипова пур ҫӗрте те маттурлӑхӗпе палӑрать. Концерт лартмалла-и, шкулта уяв ирттермелле-и – вӑл яланах унта.

Ҫав вӑхӑтрах вӗренӳре те аван ӗлкӗрсе пырать пултарулӑскер. Олимпиадӑсемпе конкурссене тӑтӑшах хутшӑнать. Кушкӑ яленче иртнӗ тӗпчев ӗҫӗсен конкурсне те хаваспах кайнӑ Даша.



Унта сӑпка юррисем ӑҫтан тата хӑҫан пуҫланса кайнине, вӗсем паянхи кун мӗнле вырӑн йышӑннине, мӗнле усӑ кӳнине каласа панӑ. Презентаци ирттернӗ. Кирлӗ информацие вӑл кӗнекесенчен, интернетран тата кукамӑшӗнчен ыйтса пӗлнӗ.

– Ҫак презентацие хатӗрленнӗ май чылай ҫӗннине пӗлтӗм, – терӗ Даша. – Авалхи пурнӑҫ питех те кӑсӑклантарать мана. Ун чухне, паянхипе танлаштарсан, пачах урӑхла вӑхӑт пулнӑ ҫав.

Пӗлтӗр «Чӑваш Енре ҫитӗнекен сиплӗ курӑксем» конкурсра палӑрнӑ вӑл. Тӗпчев ӗҫӗ ирттерсе презентаци хатӗрленӗ. Тӑван тӑрӑхри ӳсен-тӑранпа паллаштарнӑ. Вӗсенчен хӑшӗсем мӗншӗн пӗтсе пынине, Хӗрлӗ кӗнекене кӗртнисене кӑтартнӑ, каласа панӑ.

Елчӗкри искусствӑсен шкулне ҫул такӑрлатаканскер тӑмра тата гитара калама вӗреннӗ. Ҫавна май шкулти юрӑ-кӗвӗ конкурсӗсене те тӑтӑшах хутшӑнать. Уявсенче усӑ сассипе юрӑ шӑрантарса, ӑста аллисемпе кӗвӗ каласа куракансене савӑнтарать.

Ҫак класрах вӗренекен Альвина Петрова та юрӑ-ташӑпа кӑсӑкланать. Ташӑ ӑсталӑхне вӑл «Ритмика» кружокра туптать. Концертсемпе мероприятисенче вырӑс, чӑваш тата ытти халӑх ташшисемпе куракансене тыткӑнлать.



Ачаранах спортпа туслӑскер футболла выляма тата матчсене телевизорпа пӑхма кӑмӑллать. Германири «Бавари» командӑшӑн «чирлет».

Кунсӑр пуҫне тӗрлӗ ӑмӑртура, эстафетӑра чупса шкул чысне ҫӳле ҫӗклет вӑл.

– Кашни уявра, тӗрлӗ спорт тупӑшӑвӗнче хастар пирӗн Альвина, – мухтаҫҫӗ хӗр ачана пӗр класра вӗренекен тантӑшӗсем те.

Хастар вӗренекенсем малашне тата нумайрах ҫитӗнӳсем тума тӗллевлине пӗр харӑс пӗлтерчӗҫ.

## Чӗр чунсем – унӑн ҫывӑх тусӗсем

Пиллӗкмӗш класри Андрей Капустин анлӑ тавра курӑмлӑ арҫын ача. Вӑл чылай япалапа кӑсӑкланать, нумай вулать.

– Чи юратнӑ кӗнекесем – рептилисем пирки ҫырнисем, – каласа парать вӑл. Ӗлӗк-авал Ҫӗр ҫинче динозаврсем пурӑннӑ. Вӗсем тӗрлӗрен пулнӑ. Вӗҫекеннисем те, тӗлӗнтермӗшисем те чылай, – хаваспах ӑнлантарать Андрей. – Килте ҫак темӑпа ҫырнӑ кӗнеке-журнал нумай манӑн. Илемлӗ, пысӑк ӳкерчӗклисене вулама вара пушшех те кӑсӑклӑ.



Чӗр чунсене чунтан юратаканскер шкултан килсенех килӗнчи кӗҫӗн тусӗсем патне чупать. Ара, кашнине пырса ачашлас, апат парас килет-ҫке унӑн. Лео, Мурка, Дюймовочка кушаккисен савӑтне сӗт тултармалла, аквариумри пуллисен апачӗпе шывне тӗрӗслемелле. Шыва вӑхӑтра улӑштармасан пулӑсем чирлеме пултараҫҫӗ-ҫке. Пӳртри тусӗсемпе йӑпаннӑ хыҫҫӑн Андрей урама тухса чӑхсене тырӑ сапса парать. Ҫӑмарта тӑваканскерсене те ҫурӑмӗсенчен лӑпкаса илет. Маттурсем-ҫке вӗсем, кашни кунах ун валли йӑвисене «парнесем» хураҫҫӗ. Кроликсем патне те ҫитмесӗр чӑтаймасть арҫын ача. Ай-уй, епле хитре вӑрӑм хӑлхасем! Тӗрлӗ тӗслӗ тата хӑйсем. Епле-ха ачашламӑн вӗсене?

Кашни кунӗ ҫапла иртет Андрейӑн. Чӗр чунсем – унӑн юлташӗсем. Ҫывӑх вӑхӑтра ашшӗпе амӑшӗ ӑна тата тепӗр тус – тинӗс сысни – туянса парасшӑн-ха. Арҫын ача ҫав паллӑ куна чӑтӑмсӑррӑн кӗтет.

Темӗнпе те кӑсӑкланаканскер тӗрлӗ ӑпӑр-тапӑр пуҫтарать. Унӑн «коллекцийӗнче» илемлӗ чулсем, типӗтнӗ чечексем, чӗр чун шӑлӗсем, тӗксем тата ытти те чылай. Пӗрре те ахаль ларма юратмасть вӑл. Кунӗпе ӑҫта кӑна ҫитмест-ши?

Ҫитӗнсен кам пулса ӗҫлессине те палӑртса хунӑ Андрей. Вӑл поварта вӑй хурасшӑн. Амӑшне апат пӗҫернӗ чухне пулӑшма кӑмӑллать.

Бутерброд ҫине сӗрмелли хӑйӗн рецептне те шухӑшласа кӑларнӑ! Халӗ ҫав апатпа ҫывӑх ҫыннисене тӑтӑшах сӑйлать.

Пур ҫӗре те ӗлкӗрме ӑнтӑлаканскер шкулти мероприятисене те хутшӑнмасӑр юлмасть. Концертсемпе уявсенче юрӑсем шӑрантарать.

Ҫакӑнпа ҫеҫ лӑпланса ларасшӑн мар Андрей. Малалла тата нумайрах пӗлесшӗн, вуласшӑн, тӗрлӗ енлӗн аталанасшӑн вӑл.

– Андрейӑн чунӗ питӗ пуян. Ырӑ та усӑ кӑмӑллӑ вӑл. Яланах мӗн те пулин ҫӗннине пӗлме тӑрӑшать, – ырларӗ арҫын ачана чӑваш чӗлхи предметне вӗрентекен Антонина Николаевна Михеева та.

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатӗрленӗ.*

ПСИХОЛОГ КАНАШĔ

# «ЦИФРА АЧИСЕНЕ» пурнăçри вырăнне тупма мĕнле пулăшмалла?

Хальхи ачасем «техника ĕмĕрне» самай пысăк утăм тунинчен тĕлĕнме кирлех-ши? Вĕсем унчченхисемпе танлаштарсан пĕр вăхăтрах темиçе ĕç тума пултарнипе уйрăлса тăраççĕ. Паянхи кун икĕ çулти пепке планшетпа е айфонпа ĕçлеме пĕлет, пиллĕкри вара аслисене те гаджетпа усă курма вĕрентеет. Шкул çулне çитсен вăл чи йывăр компьютер программине тата нумай шайлă вăйăсене алла илеет. Çак ăрăва «цифра ачисем» тетпĕр. Ача пĕр вăхăтрах юрă итлеме, телефонпа калаçма, урок тума тата интернета сăн ÿкерчĕк вырнаçтарма пултарать. Шел, çапларах «цезарьле» хăтланкаларăшăн çитменлĕхĕ те пур. Ача информацие çиелтен çеç ăса хывать.

Тĕпчев палăртнă тăрăх, вунă çултан аслăрах шкул ачисен 90 процентĕ интернета хуть те ăçта тата кирек хăш вăхăтра кĕреет. Кĕнеке вуласси вара сайра тĕл пулать, мĕншĕн тесен вăл нумай вăхăт йышăнать. Анчах хăвăртлăха юратни ачан тимсĕрлĕхне пысăклатать, урокра каланине лайăх ас туса юлаймасть вăл. Шкул материалне ăнланма йывăрланса пырать.

«Цифра ачисем», паллах, ашшĕ-амăшĕ пек вĕренеймеççĕ. Халĕ вăхăчĕ те урăх. Информаци калăпăшĕ улшăнать, компьютер технологийĕсем вăй илсе пыраççĕ.



### Шкул материалне епле майпа ăса хывмалла-ши?

Ачасем, хăвăр тата ыттисем мĕн туни пирки шухăша кайман-и эсир? Вĕрентекене тимлĕ сăнăр та çак ыйтăва хуравлăр: мĕншĕн вăл урока васкамасăр ăнлантарать-ши, мĕнлерех ал хусканăвĕпе тата пуплев кĕвĕлĕхĕпе усă курать? Вара материала ăнланма çăмăлрах пулĕ, урок вăхăчĕ те вăрах тата кичем иртнĕн туйăнмĕ.

### Тимлĕхе мĕнле ÿстермелле?

Ачасен халĕ хăвăртрах шухăшлама тивет. Çавăнпа пуç мими пĕр ыйтăва татса параять, теприне вара çук. Анчах кашни кун хатĕрленсен, вĕренÿ çине алă сулмасан ку çитменлĕхрен хăтăлма пулать, вара пĕр харăсах темиçе ыйтăва татма май килĕ. Çапах шухăшлама çеç мар, туйма та пĕлмелле. Компьютер умĕнче сигнал кĕтсе ларакан ачасем туйăм мĕнне манаççĕ. Шăрша та, сасса та япăхрах туяççĕ вĕсем, кашни сĕртĕнÿрен тата куçа-куçăн калаçассинчен хăраççĕ.

Пултарулăх ĕçĕсемпе аппаланни ку тĕлĕшрен самай пулăшĕ. Тĕслĕхрен, çĕр кăпкалатса чечек лартăр, сĕтел-пукан куçарăр, партăсене çуса тасатăр, пĕр-пĕр уяв сценарийĕ хатĕрлĕр. Виртуаллă тĕнчери хăнăхусене ку тĕнчене куçарма пĕлмелле. Çĕрпе ĕçленĕ вăхăтра та хамăр туйăмсене аталантарма пулать.

### Компьютер вăйăинче мĕн шута илмелле

Кашни япаларах ырă ен курма пулать. Пур вăйă та хăрушă мар-çке. Вĕсенчен ытларахăшĕ, нумай вăхăтлăх мар пулсан, хăш-пĕр хăнăхăва аталантарма пулăшать. Рольпе выляни çынсемпе хутшăнма вĕрентет, стратеги-вăйă тишкерÿ хăнăхăвĕсене çирĕплетет. «Пемеллисем» команда пĕрлĕхне туйма май параççĕ. Стимулятор-вăйăсем (тĕслĕхрен, самолетпа вĕçесси) техникăна ăнланма пулăшаççĕ тата тавра курăма анлăлатаççĕ. Логика вăййисем вара шухăшлава аталантараççĕ.

Çапах та çакăн пек вăйăсемпе чылай вăхăт irттермелле мар, уроксене те пурнăçламалла, атте-аннене те пулăшмалла. Виртуаллă тĕнчене «куçсах» ан кайăр, унсăрăн вăл сире шурлăх пекех çăтĕ.

*Ольга МУРАТОВА, психолог.*

● ТЕСТ

# Эсĕ хăвна мĕнле хаклатăн?

**1. Мĕн те пулин тунишĕн е каланишĕн час-часах кулянатăн-и?**
а) час-часах – 1 балл;
ă) хăш чухне çеç – 3 балл.

**2. Çивĕч ăслă çынпа калаçнă чухне эсĕ:**
а) унран ăслăрах курăнма тăрăшатăн – 5 балл;
ă) унпа тупăшмастăн, калаçуран тухатăн кăна – 1 балл.

**3. Хăш шухăш сана çывăхрах?**
а) чылайăшне ăнăçу пек туйăнакан япала вăл – чăннипе каласан, нумай ĕçленин «çимĕçĕ» – 5 балл;
ă) ăнăçу лару-тăру епле пынинчен килет – 1 балл;
б) йывăр лару-тăрура чи пĕлтерĕшли – çирĕплĕх тата ăнăçу мар, юнашар хавхалантаракан çын пулни – 3 балл.

**4. Пĕри санран евĕрлесе кулать. Эсĕ:**
а) кулса ятăн та хăвра ыттисенчен уйăрмах ен пурришĕн савăнатăн – 3 балл;
ă) унра та мĕн те пулин кулăшли асăрхаса витлетĕн – 4 балл;
б) кÿренетĕн, анчах палăртмастăн – 1 балл.

**5. Эсĕ яланах васкатăн, сана вăхăт çитмест, е эсĕ çын пĕччен пурнăçлайман ĕçе те хăв çине илетĕн...**
а) çапла – 1 балл;
ă) çук – 5 балл;
б) пĕлместĕп – 3 балл.

**6. Юлташна парнелеме мĕнле духи суйлатăн?**
а) хăвна килĕшекеннине – 5 балл;
ă) юлташун кăмăлне каять пек туйăнать, сана килĕшмест пулин те – 3 балл;
б) пĕр паллă передачăра нумаях пулмасть рекламăланине – 1 балл.

**7. Пĕр-пĕр лару-тăрăва хăвна пурнăçринчен урăхларах тытнă пек куç умне кăларма юрататăн-и?**
а) çапла – 1 балл;
ă) çук – 5 балл;
б) пĕлместĕп – 3 балл.

**8. Сана тусун çитĕнĕвĕ хăвăннинчен пысăкрах пулни вĕчĕрхентерет-и?**
а) çапла – 1 балл;
ă) çук – 5 балл;
б) хăш чухне – 3 балл.

**9. Кама та пулин хирĕçлесен санăн кăмăл тулать-и?**
а) çапла – 5 балл;
ă) çук – 1 балл;
б) пĕлместĕп – 3 балл.

**10. Кусна хуп та шухăшра висĕ тĕсрен пĕрне суйла:**
а) кăвак – 1 балл;
ă) сарă – 3 балл;
б) хĕрлĕ – 5 балл.

**Балсене шутлатпăр**

***50-38 балл.*** Эсĕ хăвăнпа кăмăллă. Ыттисенчен çÿлерех тăма, хăв камне кăтартма, шухăшна пĕлтерме юрататăн. Йĕри-тавра сан çинчен калаçнишĕн кулянмастăн, анчах ыттисене час-часах тиркетĕн. Санăн пĕр çитменлĕх пур: хăвра пĕр кăлтăк та асăрхамастăн, ыттисен шухăшне тăнламастăн. Питĕ шел...

***37-24 балл.*** Эсĕ хăвпа килĕшÿре пурăнатăн, хăвна пĕлетĕн тата шанатăн. Хуть те мĕнле лару-тăруран та тухаятăн. Эсĕ пуринпе те кăмăллă. Хăвна тĕрĕс хаклатăн, ÿксен те çĕкленме пултаратăн, пулăшу килессе кĕтсе лармастăн.

***23-10 балл.*** Эсĕ хăвăнпа кăмăлсăр. Тăтăшах иккĕленÿпе асапланатăн, хăв ыттисен шайне çитеймен тесе шухăшлатăн. Чарăн! Хамăра юратмалла. Нумай шухăшлатăн пулин те хăвăнпа кăмăлсăрланма пăрах. Эсĕ хăвна хăв хисеплемесен ыттисенчен мĕн кĕтме пулать?

● САЛАМ СĂВВИСЕМ

**Çывăх çынсене, юлташсене яланах ăшă сăмахпа савăнтарас килет. Чун-чĕре саламне сăвăлла çитерсен вара вĕсен кăмăлĕсем татах та çĕкленĕç. Çавăн пек хатĕр сăвăсене вырăсла чылаях тупма пулать. Анчах сирĕн чăвашла саламлас килет-çке. Çапла-и? Эпир сире пулăшма хатĕр!**



### Çуралнă кунпа

* * *

Пул телейлĕ, савнăçлă ялан,
Ан чирле, ан ватăл нихçан.
Йăлтăр кулă çиçтĕр сăн-питре,
Пурнăç пултăр вăрăм та хитре.
Юрату хĕмлентĕр чĕрере.
Ăнăçу сунам вĕренÿре!
Ĕмĕт пурнăçлантăр яланах,
Эсĕ çакна тивĕçлĕ, чăнах!

* * *

Пирĕшти сыхлатăр пурнăçна,
Усалли ан пÿлтĕрччĕ çулна,
Тартăрччĕ инкек хăех санран,
Ан пăрахчăр юлташсем нихçан.
Пул телейлĕ! Ан курсамччĕ шар.
Ăнăçу пулинччĕ юнашар!

* * *

Çак хитре, асамлă кун
Саламлатăп эп сана!
Савăнать-çке саншăн чун.
Ах, çĕклесчĕ кăмăлна!
Çут телей сунам пĕр тинĕс,
Шанчăкне те – океан.
Ыррине ялан шансам эс,
Таптăр савнăçпа «фонтан»!

Яланах туйсамччĕ эсĕ
Тăвансен юратăвне.
Пач та кулянма пĕлмесĕр
Чечеклентер чĕрÿне.

* * *

Çак пысăк кун çитсессĕнех
(Çуралнă кун пирки калатăп)
Сана çапла эп кашнинчех
Чунтан-вартан-çке саламлатăп.

Пулинччĕ пурнăçу таса,
Кашни кун ырăпа çуталтăр.
Телей çывхартăр васкаса,
Парне пулса вăл савăнтартăр!

### Кулăшла SMS-сем

* * *

Абонент ĕçлет те халĕ,
Калаçма ун вăхăт çук.
Вăл кĕçех хăех сас парĕ
Кăшт ĕçрен пушаннă чух.

* * *

Кала, ăçта çухалтăн эс?
Пачах çырмастăн SMS...
Эп ывăнтăм хыпар кĕтсе.
Ăçта çÿретĕн-ши çĕтсе?

* * *

Салам, тăванăм! Мĕнлерех
Пурнатăн эсĕ? Чиперех?
Çакна кăна пĕлесчĕ ман.
Чипер пулсан йăлтах аван!

# Пире укçа памасан кушĕлки тĕпĕ çĕтĕлтĕр

Кукка килти сăрана юратать. Çавăнпа анне пахчара ятарласа хăмла ӳстерет. Пушă вăхăтра вара кăпăклă сăра вĕретет те ун патне хăнанаваскать. Паллах, мана пĕрле илет ялан. Эх, юратса ĕçет сăрана кукка! Тутине шăлкалать те:

– Ну, аппа, тутлăскере ĕçсе тăранма май çук, пысăк тав! – тет çав тери кăмăллăн.

Паян урамра пĕрремĕш юр çурĕ. Кăнтăрла иртсен анне кĕленче савăта сăра тултарчĕ те шăллĕ патне çитсе килессине хыпарларĕ. Эпĕ те хăпăл-хапăл тăхăнса ун хыççăн вĕçтертĕм. Акă куккассен пӳрчĕн алăк урати урлă каçсанах анне хитре сассипе юрă шăрантарчĕ.

– Шăллăм патне каяс тесе
Шĕшкĕ чанпа сăра турăм,
Пыл куркипе пыллантартăм,
Шыв куркипе шĕветрĕм,
Шăна кĕпçипе юхтартăм,
Йĕкел хуппипе илсе килтĕм,
Мăйăр хуппипе ĕçтертĕм.

Эх, кукка савăнчĕ! Аннене ыталасах илчĕ. Мана çеç асăрхамарĕ кукка. Кăшт кӳрентĕм. Вара эпĕ те курнăçланас терĕм.

– Их! Ах! И-ха-хак!
Ик эрешмен кӳлтĕмĕр,
Варне хăнкăла ятăмăр,
Ик таракан лартрăмăр,
Çырма урлă каçрăмăр, – кăшкăрашрăм тĕпĕр-тĕпĕр сиккелесе.

Ах, ман çине аннепе кукка тĕлĕнсе пăхаççĕ. Вăтанса кайрăм, пит те хĕрелчĕ ахăртнех. Пĕçерсе кайрĕ. Ним тăвайман енне кравать айне кĕрсе лартăм.

– Ан шиклен, питĕ килĕшрĕ эсĕ ташласа юрлани. Атя, тух та çав шăтăкран тепре кăтарт-ха хăвăн пултарулăхна, – терĕ кукка лăпкăн.

Йăпăрт çеç йăраланса тухрăм кравать айĕнчен. Алăсемпе сулкалашса каллех çав юрра пуçларăм...



Арçынна курсан
Пичче те,
Арăма курсан
Инке те,
Хĕре курсан
Аппа те.



Шыв пек пуян пул,
Шыв пек вăйлă пул!




Пире укçа памасан,
Пире укçа памасан
Кушĕлки тĕпĕ çĕтĕлтĕр,
Кушĕлки тĕпĕ çĕтĕлтĕр.



Паян манăн çăкăра
Тахăшĕ вăрланă.
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă –
Чăн та эс, ав, пытаннă.

Элиза ВАЛАНС (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Вӑрнарсем ялан вӑр-вар

## Вӗрентекенсене тав тӑватӑп!

Ҫак кунсенче Вӑрнарти 2-мӗш шкулта маттур ачасемпе паллашрӑмӑр. Вӗсенчен пӗри – Анастасия Ермошкина. Саккӑрмӗш класра вӗренет. Унччен вӑл Уравӑш шкулне сукмак такӑрлатнӑ. Настя питех те пултаруллӑ. Ҫакна унӑн тусӗсем те, вӗрентекенсем те палӑртрӗҫ.

Хӗр ача юрлать те, ташлать те. Пӗр конференципе олимпиада та унсӑр иртмест. Ҫав вӑхӑтрах сӑвӑ та шӑрҫалать.

– Пӗчӗкренех ӳнер шкулне ҫӳренӗ... – палӑртать хавасланса. – Эпӗ ӳкерме юрататӑп.

Ҫуллахи каникулта Настя ытти ҫулсенчи пекех хӑйӗн юратнӑ «Звездный» лагерьте каннӑ, сывлӑхне ҫирӗплетнӗ.

– Унта кӑҫал та хамӑн пултарулӑха тӗрлӗ енлӗ аталантартӑм. Чылай конкурс ҫӗнтерӳҫи пулса килнишӗн паян та савӑнатӑп, – тет.

– Пӗрремӗш вӗрентекенсене Наталья Анатольевна Ксенофонтовӑпа Инна Михайловна Ракеевӑна пӗлӳ тӗнчинче ҫухалса каясран пулӑшнишӗн, вӗрентнӗшӗн, ҫавӑн пекех Уравӑш тата Вӑрнарти 2-мӗш шкулӑн ытти вӗрентекенӗсене те тав сӑмахӗ каласшӑн. Педагогсем, сире питӗ юрататӑп, хисеплетӗп. Малашлӑхра та ҫитӗнӳсемпе савӑнтарма сӑмах паратӑп.



## Вӑхӑт тупатӑпах пулла кайма...



Валерия Лукина тӑххӑрмӗш класра вӗренет. Ӗҫчен те маттур, тӑрӑшуллӑ хӗр ача. Музыка шкулне ҫӳрекенскерӗн пултарулӑхӗ иксӗлми.

– Юрӑ-ташӑ вӑл – манӑн пурнӑҫ! – тет хавхаланса ҫамрӑк артист. Тӗрлӗ пултарулӑх конкурсне хутшӑнса районта та, республикӑра та паларать. «Мехел», «Ҫӑлтӑрчӑк», «Соловушка» конкурссенче сцена ҫинчен куракана темиҫе хут та савӑнтарнӑ.

– Чӑн-чӑн артистка пулатех пуль ӗнтӗ, – теҫҫӗ килтисем Лерӑшӑн савӑнса.

Спортпа та туслӑ вӑл. Хӗлле пӗр ӑмӑрту та унсӑр иртмест. Йӗлтӗрҫӗсен тупӑшӑвӗсенче яланах малти вырӑнта. Коньки ҫине тӑрса та ӑмӑртӑва васкать.

– Шкулти олимпиадӑсене, конференцисене, конкурссене тӑтӑшах хутшӑнатӑп. Акӑ «Чӑваш тӗрри» конференцире кӑҫал иккӗмӗш вырӑн йышӑнтӑм. «Кӗркунне мисӗ» конкурсра та чи хастарри пултӑм. Пушӑ вӑхӑчӗ сахалтарах-ха. Ҫапах та ал ӗҫӗ тумасӑр пурӑнаймастӑп. Ҫыхма юрататӑп. Ҫулла вара пулла каймасӑр пӗр кун та иртмест. Вӑхӑт тупса яланах кӳлӗ хӗррине тухса чупатӑп. Мӗн тери чуна тыткӑнлакан киленӗҫ вӗт вӑл! – ҫӗкленӳллӗн каласа парать тӑххӑрмӗш класри Лера.

## Чӑваш чӗлхи урокӗ – чи юратни

Вырӑс ачисем те чӑвашла таса та хитре калаҫни питӗ савӑнтарать. Тӑван чӗлхе конкурсӗсене часчас хутшӑнаҫҫӗ.

– Чӑваш чӗлхи урокӗ – чи юратнисенчен пӗри! – теҫҫӗ улттӑмӗшсем.

– Сатур ачасем, пурте тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ. Чӑваш чӗлхине кӑмӑллани савӑнтарать. Нумаях пулмасть сӑвӑ ҫырма пикенсе пӑхрӑмӑр, кӗҫех пирӗн ӗҫсем хаҫат страницинче вырӑн тупасса шанатӑп... – тет кӑмӑллӑн чӑваш чӗлхи вӗрентекенӗ Вероника Трифоновна Дмитриева.

Тӑван чӗлхене юратни, унӑн пуласлӑхӗшӗн тӑрӑшни ҫак ҫамрӑксенчен килет-ҫке!



## Чуна лӑпкӑлӑх кӳрекен



Психолог ӗҫӗ питӗ кӑткӑс. Унӑн ҫыннӑн чун ыратӑвне сиплеме пӗлмелле. Вуннӑмӗш класри Настя Капитонова та ҫак профессие суйласшӑн. Шкултан лайӑх вӗренсе тухса аслӑ шкулта ӑс пухас тӗллевлӗ.

Халӗ те вӑл сывӑх юлташӗсене кирлӗ вӑхӑтра час-час пулӑшать.

– Настя, санпа канашланӑ хыҫҫӑн чунра лӑпкӑ пулать, – тесе чылайӑшӗ тав тӑвать ӑна. Ҫакӑн пек хаклани ӑна тата хавхалантарать.



## Ӗмӗтлӗ ҫын – ҫунатлӑ

Ӗмӗтленни нихӑҫан та япӑх мар. Виҫҫӗмӗш класри Кирилл Архипов вутҫулӑмпа кӗрешекен, Кирилл Павлов вара полици ӗҫченӗ пулас тӗллевлине палӑртрӗҫ. Шкултан вӗренсе тухиччен вӑхӑт нумай-ха. Анчах ӗмӗт пурри пӗрре те начар мар.

– Ҫак профессисене алла илес тесен тӑрӑшса вӗренмелле, нумай кӗнеке вуламалла, – пӗлтерчӗҫ пӗчӗкскерсем хӑйсен шухӑшне. Арҫын ачасем иккӗшӗ те шкулта «4» тата «5» паллӑсемпе вӗренеҫҫӗ.

– Эпӗ шкултан таврӑнсан аттепе аннене пулӑшатӑп. Унтан ача садӗнчен шӑллӑма кайса илетӗп те урок тума ларатӑп, – терӗ Кирилл Архипов.

Ачасем килте те, шкулта та тӑрӑшуллӑ пулни ашшӗ-амӑшне хавхалантарать. Малашлӑха мӗн пӗчӗкрен ӑнтӑлни хӑех ҫитӗнӳ тума тӗллев лартни мар-и вара?

*Кристина БАЙБАТОРОВА (тел. 56-11-80) хатӗрленӗ.*

ХАЛАП ХАПХА ТĂРРИНЧЕ

# Тилĕсене нихăçан та ан шанăр!

Пĕррехинче эпĕ вăрмана кайма аннерен ирĕк ыйтрăм. Вăл мана: «Юрать», – терĕ. Пысăк карçинкка илтĕм те утрăм вара. Юрла-юрла кăмпа пуçтаратăп. Мĕн тĕрли кăна çук-ши кунта: кăрăçсем, шурă кăмпасем, ăвăс кăмпи... Çиме юраманнисем те хăйсене таттарасшăн.

«Манран эмел хатĕрлеççĕ, мана тат», – тет шăна кăмпи. Эпĕ ăна тĕкĕнмерĕм. Вăл каллех: «Манран эмел хатĕрлеççĕ, мана тат», – тет. Унран аранах хăтăлтăм.

Ывăнса çитрĕм те канма лартăм. Ман пата тилĕ чупса килчĕ. «Санăн апат çиес килет-и?» – тесе ыйтать хăй. Кăмпа татнă вăхăтра эпĕ хырăм выçнине те сисмен. «Çиес килет, – тетĕп. – Анчах мĕнпе хăналама пултаратăн эсĕ?» Тилĕ мана пĕр пысăк йывăç патне, хăйĕн килне илсе кайрĕ. Йăвара пĕр купа пан улми! Эпĕ виççĕштăваттăшне çирĕм те тăранса лартăм. Ахаль пан улми мар пулас, асамли!

Каç та пулса ларчĕ. Тилĕ мана çĕр каçма ӳпле майлаштарса пачĕ. Хăй вара: «Шăши тытма каятăп», – тесе чупса тарчĕ. Лайăх тĕлĕксем курсах çывăрнă.

Ирхине мана мулкач вăратать. «Киле кай!» – тет. Анчах эпĕ çулне пĕлместĕп, аташнă ĕнтĕ. Макăрма пуçларăм. Мулкач мана лăплантарать. «Ан йĕр, эпĕ сана пулăшăп. Хăвăртрах тар кунтан. Сана кашкăрсем хăвалаççĕ, часах кунта çитĕç», – тет.

Анчах вĕсене кам пĕлтернĕ? Тилĕ иккен!

Тĕлĕнсех кайрăм. Тилĕ мана пан улмипе хăналарĕ, ӳплене вырнаçтарчĕ, хăй вара кашкăрсене чĕнет. Тинех ăнлантăм: чее тилле нихăçан та шанмалла мар, унпа туслашмалла та мар.

Мулкачпа нумай утнă хыççăн киле каймалли çул çине тухрăмăр. Пире хирĕç пăшал çакнă сунарçăсем килеççĕ. Пĕри тӳрех аллине пăшал тытрĕ, мулкача тĕллерĕ. Эпĕ: «Ан тивĕр, вăл мана пулăшрĕ. Пире кашкăрсем хăвалаççĕ, вĕсене тытăр», – терĕм. Сунарçăсем тав турĕç те васкасах вăрманалла чупрĕç. Часах пăшал сасси янăраса кайрĕ. Кашкăрсем капкăна лекрĕç пулас.

Эпĕ киле чиперех çитрĕм. Савăннипе мулкача пилĕк пысăк кишĕрпе хăналарăм, хĕллехи сивĕ кунсенче выçса çитсен хăнана килме чĕнтĕм.

***Филипп АФАНАСЬЕВ.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.




**Конкурс!**

## Анне кунĕ ячĕпе



Пире кам ачашшăн
Лăпкать пĕчĕкрен?
Чипер çын тăвасшăн
Çунать чĕререн?(...)

Кам пултăр? Пĕлеççĕ
Туссем вăл камне:
Вăл – пирĕн телей-çке,
Вăл – пирĕн анне!

***(А.Ĕçхĕл сăввинчен).***

Раççейре Анне кунне чӳк уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче паллă тăваççĕ. Çак уява халалласа «Тантăш» хаçат пултарулăх конкурсĕ ирттерет. Ачасем, унта хутшăнас тесен анне çинчен сăвă е калав çырса, ӳкерчĕк е сăн ӳкерчĕк туса **чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕччен** редакцие ярса парăр. Чи маттуррисене Хисеп хучĕпе тата асăнмалăх парнепе чыслăпăр.

# Хир сысние пула çĕтсе кайрăмăр

Пĕррехинче эпир асаннепе вăрмана кайрăмăр. Кăçал мăйăр ăнса пулчĕ, çавăнпа ăна чылай татрăмăр. Кăмпа та пуçтартăмăр.

– Мăйăр кашни çулах пулмасть, ытларах татар, – тет асанне.

Кутамккасене тултарас тесе вăрмана шалтан шала кĕрсе пытăмăр. Пĕр-пĕринчен çухалса юлас мар тесе асаннепе: «Ау! Ау!» – тесе кăшкăркаласа пыратпăр. Такам пире хирĕç «ау!» тесе мар, «нăрхнăрх» тесе калать. Пăхатпăр та: пирĕн хыçра хир сысни тăрать. Килти сысначан кăшт çеç пĕчĕкрех хăй.

– Ой-ой! – хăранипе кăшкăрса ячĕ асанне, тӳрех мана алăран çавăтрĕ.

– Кай, кай! Утах хăвăн çулупа! – хам хăранине асаннене кăтартас мар тесе чĕр чуна алăри патакпа хăратам пекки турăм.

Хир сысни пĕр еннелле, эпир асаннепе тепĕр еннелле тартăмăр. Чупатпăр, чупатпăр, ăçта çул тытнине хамăр та пĕлместпĕр. Каллех: «Ау! Ау!» – тесе кăшкăрма пуçларăмăр. Татах: «Нăрх!» - тенĕ пек туйăнчĕ те кутамккасене пăрахсах йывăç тăрне хăпарса лартăмăр. Хир сысни мар, мулкач иккен. Вăл хăй те пирĕнтен хăрарĕ пулас, тĕмсем хушшине тарса пытанчĕ.

Çӳлтен пĕтĕмпех сăнама пулать. Акă хамăр ялти икĕ хутлă чи çӳллĕ пӳрт тăрри те курăнать, савăнсах кайрăмăр. Йывăç çинчен васкаса антăмăр, кутамккасене пуçтартăмăр та яла васкарăмăр. Çур сехетрен киле çитсе те тăтăмăр!

***Николай ИВАНОВ.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Тĕпчевçĕсем вырăнĕнче пултăмăр



Екатерина Ивановна Григорьева пире «Тăван тавралăх» предмета вĕрентет. Унăн урокĕсем тĕлĕнмелле интереслĕ иртеççĕ. Нумаях пулмасть уçă урок йĕркелерĕ.

Мĕн кăна çĕннине пĕлмерĕмĕр-ши эпир çак кĕске хушăра! Виçĕ ушкăна пайлантăмăр та ăслăлăх лабораторийĕ уçрăмăр. Эпĕ ăслăлăхăн аслă сотрудникĕ вырăнĕнче пултăм. Тĕрлĕ сăнав ирттерме мана шанса пачĕç. Пулăшаканĕсем тата экспертсем вара – пĕрле вĕренекенсем. Хамăра чăн-чăн тĕпчевçĕсем пек тытрăмăр, шыва тĕрлĕ енлĕ тĕрĕслесе сăнавсем ирттертĕмĕр.

Урокра ытти вĕрентекен тата пирĕн атте-анне пулни яваплăха пушшех ӳстерчĕ. Шупашкартан килнĕ хăна «Чăваш чĕлхи» тата «Ылтăн шевле» кĕнекесен авторĕ Алевтина Рюриковна Кульева пирĕнпе тĕл пулса калаçрĕ. Эпир унпа пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр. Уçă урок та тĕл пулу та асра юлмалла иртрĕ.

***Настя СЕРГЕЕВА, 2 класс.***

Шупашкар районĕ,
Ишекри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул.

ПИРĔН ТАНТĂШ

# Пĕчĕккĕн çитĕнӳ патне

Çивĕч ăс-тăнлă, талантлă, вĕренӳре пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă ачасене хавхалантарас тĕллевпе çулленех район пуçлăхĕн стипендийĕпе тивĕçтереççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче сумлă стипендие пилĕк ача илĕ. Çак йышра Ыхра Çырми шкулĕнчи 7-мĕш класра ăс пухакан Рамзиля Алеева пурри питĕ савăнтарать. Вăл çак ята вĕренӳри хастарлăхшăн тивĕçнĕ.

Хаçат тусĕсене пултаруллă та маттур, пур енлĕн аталанма тăрăшакан, яланах çĕннине пĕлме çунакан, çитĕнӳ тума ăнтăлакан вĕренекенпе паллаштарма мана, класс ертӳçине, питĕ кăмăллă.

Рамзиля пур енчен те тĕслĕх илмелли хĕр ача. Пĕрремĕш класранпах «5» паллăпа çеç вĕренет. Уншăн нихăш предмет та йывăррисен шутне кĕмест, пурне те кăмăллать. Мăн кăмăллă мар вăл, сăпайлă, яланах хăйне лăпкă тытать. Уроксенче тимлĕн итлесе ларни, илемлĕ литература хайлавĕсене вулани ăна пысăк ӳсĕмсем тума пулăшать. Килте вуласа тухайманнине уроксем умĕн тишкерет. Ăнланман ыйтусене вĕрентекенпе тĕпчет. Пултаруллăскерĕн çитĕнĕвĕ те чылай. Вăл район, республика шайĕнче иртекен тĕрлĕ конкурсра пĕрре мар çĕнтернĕ. Чунĕпе ырă та таса, пĕтĕм таврана юратаканскер, çывăх çыннисене тата юлташĕсене йывăр вăхăтра пулăшма яланах хатĕр. Пултарулăхне, тăрăшулăхне, яваплăха туйса ĕçленине кура шкулти ачасен пĕрлешĕвĕн председателĕ пулма уйăрнă ăна.



Юратнă ашшĕпе амăшĕ тĕпренчĕкĕн çитĕнĕвĕсемшĕн чунтан савăнать, вĕсем ыйтнине яланах тивĕçтерме тăрăшать. Пĕлӳшĕн çунаканскере кирлĕ вĕренӳ хатĕрĕсем туянса пама май тупатех çемье. «Мĕн хушнине тĕплĕн пурнăçламасăр çывăрма та выртмасть вăл», – пĕлтерчĕ амăшĕ хĕрĕ пирки хĕпĕртесе. Пушă вăхăтра кĕнеке вуланисĕр пуçне ӳкерме, тĕрлеме кăмăллать.

Медицина кăсăклантарать тата илĕртет çамрăк хĕр ачана, çавăнпа та вăл тухтăр пулма ĕмĕтленет. Картса хунă çутă ĕмĕчĕ патне çитме пĕчĕкрен пуçламаллине никам каламасăрах ăнланать. Çавăнпа кашни ырă пулăмра пуласлăха курать. Иккĕленместĕп, Рамзиля пурнăçра хăйĕн вырăнне тупма, чуна çывăх ĕç суйласа илме пултаратех.

Рамзиля малалла тата та пысăк çитĕнӳсем тăвасса, тапса тăракан иксĕлми хавалĕ пурнăç тăршшĕпех çитессе шанатăп.

***Светлана КУЛАКОВА, верентекен.***

Патăрьел районĕ,
Ыхра Çырми шкулĕ

**(Малалли. Пуçламӑшӗ 42-43-мӗш номерсенче).**

*Кӑшт тӑрсан вӑрманта çуйӑхнӑ-кӑшкӑрнӑ сасӑ илтӗнет. Икӗ Шуйттан çури сиксе тухать. Вӗсем иккӗшӗ тавлашаççӗ.*

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Яр, тетӗп!

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Ямастӑп! Ман кушел.

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Э-э...Эп кӑтартрӑм та – эс илтӗн! семпе туслашса, вӗсемпе суту-илӳ тума пултараймастӑп. *(Хушса).* Прис кушеле! Килчӗç-ши, килмерӗç-ши? Ним те паллӑ мар.

*Карçинкка йӑтса Кашкӑр кӗрет.*

КАШКӐР. Нумай кӗттертӗм пулас, ырӑ çыннӑм.

ИЛЮК. Эп сана пит кӗтсех те кайман.

КАШКӐР. Питӗ шел. Ак эп сан валли кучченеç илсе килтӗм. Лар та çи. парӗ-ха мана?

КАШКӐР. Ырӑ кӑмӑлна пула сан патна пулӑшу хӑех килме пултарать.

ИЛЮК. Питӗ аван пулӗччӗ те... Итле, Кашкӑр тусӑм, эпӗ Савтеписӗр пурӑнаймастӑп. Ман ӑна тупмасӑр каялла çул çук.

КАШКӐР. Ку тӗрӗсех ӗнтӗ. Анчах усӑсӑр пуçна çухатма кирлӗ мар. Эсӗ ӑслӑ çамрӑк. Сан пурӑнас пулать. юратман. Юлашки вӑхӑтра вӑл илсе килнӗ хӗрсене тарма пулӑшаттӑмччӗ. Çав тери асаплантарнӑ вӑхӑтра вӗсен хутне кӗрсен пиччепе сахал мар тавлашнӑ. Çавӑншӑн-ши,Чике-Сухал мана килтен хӑваласа кӑларса ячӗ. Акӑ, куртӑн-и, мӗнлерех Кашкӑр эпӗ? Чике-Сухал ватах мар-ха вӑл. Пурӗ те виç çӗр хӗрӗх çичӗ çулта çеç. Вӑл çавӑн пек вӑрӑм сухала вӗçсе çӳреме çӑмӑл пултӑр тесе ӳстерсе

Степан МИХАЙЛОВ

# СӲНМИ ЮРАТУ е ПУХВИРӖН КУЛАС КИЛЕТ

**(3 пайлӑ, 5 курӑнуллӑ пьеса-юмах)**

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Эп илнӗ пулсассӑн, вӑл ман кушел.

ИЛЮК. Эй, шуйттан çурисем! Мӗн тавлашатӑр эсир унта?

*Шуйттан çурисем Илюка кураççӗ.*

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Ой, эпир сана курман та...

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Атя таратпӑр.

ИЛЮК. Ниçта та ан тарӑр, эп сире тивместӗп. Мӗншӗн тавлашатӑр?

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Эп пирвай куртӑм çак кушеле.

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Эп илтӗм. Кушел манӑн пулать.

ИЛЮК. Мӗн пур унта сирӗн кушелре?

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Унта арçурисем.

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ *(вӑрттӑн, хуллен).* "Кулас килет!"– тесессӗнех арçурисем сиксе тухаççӗ те кӑтӑклаççӗ.

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ *(такам илтесрен хӑранӑ пек).* "Прис кушеле!" – тесе ӗлкӗреймесен кӑтӑкласах вӗлереççӗ.

ИЛЮК. Кушелӗ йывӑр-и? Миçен вӗсем?

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Темиçен вӗсем. Хӑйсем куçа курӑнмаççӗ, кӑтӑкласах вӗлереççӗ.

ИЛЮК. Эсир пӗр кушеле пур пӗрех уйӑраймастӑр. Сутӑр ӑна мана.

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Эпир асатте патне илсе каятпӑр та вӑл мана парать.

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Асатте сана парсан, эпӗ санне пур пӗр вӑрлатӑп.

ИЛЮК. Ну, капла сирӗн ӗмӗрех тавлашу та çапӑçу пулать. Мана сутсан иксӗр ӗмӗрех туслӑ пурӑнатӑр.

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ *(пуçне хыçкаласа).* Те чӑнах та çапла...

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Чӑнах... Атя, сутатпӑр!

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Мӗн паратӑн пире кушелшӗн?

ИЛЮК. Малтан таварне пӑхам-ха. Таварне кура хакне калӑп. Кушеле мана парӑр-ха, эпӗ ӑна пӑхам. Мӗнле унта, кушелне курам...

2-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Ме, кур!

1-мӗш ШУЙТТАН ÇУРИ. Анчах ас ту! *(Шӑппӑн).* "Кулас килет!" – тесе хыттӑн ан кала. Вӗсем çав самантрах сиксе тухса кӑтӑклама пуçлаççӗ.

ИЛЮК. Япалана тӗрӗслемесӗр мӗнле илес-ха? Малтан пӗлес пулать мӗн пуррипе суккине. *(Кушеле илет, çавӑркаласа пӑхать).* Ытлашши аванни ним те çук. Кушел кушел пекех. Мӗнле япаларан тунине те пӗлместӗп. Тӗрӗслесе пӑхамха. Кушел, шуйттан çурисен кулас килет!

*Шуйттан çурисем çухӑрса яраççӗ, сикеççӗ, ахӑлтатса кулса-çуйӑхса тухса тараççӗ.*

ИЛЮК. Эп пӗтӗм чӗр чуна та, тискер кайӑка та кӑмӑллатӑп. Анчах шуйттан-



Ку карçинккари апат -çимӗçе темиçе туй халӑхӗ çисен те пӗтерейме. "Апат-çимӗç, сӗтел çине тух!" – тесен, мӗн кирли йӑлтах тухса ларать.

ИЛЮК. Кунта пирӗн сӗтел çук та, çапах çиес пулать. Апла пулсан тӗрӗслесе пӑхар...

КАШКӐР. Сӗтелсӗр те юрать. Апатçимӗç пӗрех карçинккара пулать. *(Хушса).* Апат-çимӗç, сӗтел çине! Акӑ, кур ӗнтӗ!

*Темӗн тӗрлӗ апат-çимӗç карçинккара курӑнать.*

ИЛЮК. Ай, аттемӗр! Мӗн-мӗн çук-ши кунта! Ну, тавтапуç сана куншӑн, Кашкӑр тусӑм. Çисе пӑхам-ха. *(Кукӑль илсе çиет).*

КАШКӐР. Кала-ха, ырӑ çыннӑм, ӑçта кайма тухнӑ эсӗ? Ку тӗттӗм вӑрманта питӗ сайра-хутра çеç çын курма пулать.

ИЛЮК. Ман каяс çул питӗ инçе пулмалла. Тӗрӗссипе каласан, эпӗ хам та пӗлместӗп. Таçта каятӑп.

КАШКӐР. Çакӑн пек сӗм вӑрманпа кайма тухнӑ пулсан, ӑçта кайнине пӗлетӗнех пуль тетӗп. Çапла мар-и вара?

ИЛЮК. Çаплине çапла та... Ну, юрӗ. Сана эпӗ ӑçта кайнине пӗлме интереслӗ пулсан – калам. Эп çуралнӑ ялта ман чунран юратнӑ хӗр пурччӗ. Эпир пӗрпӗрне мӗн ачаранах юратнӑ тата виличчен юратма сӑмах панӑ. Нумаях пулмасть çав ман юратнӑ Савтепине, хам куç умӗнчех Чике-Сухал вӑрласа илсе кайрӗ. Халь эпӗ Чике-Сухал патне кайса Савтепине тупса илес тетӗп.

КАШКӐР. Апла сан çулу çӑмӑл мар. Чике-Сухал патне нумай çын кайнӑ, анчах каялла таврӑннине пӗрне те курман. Никам та пулӑшмасан, пӗрпеччен эсӗ те усӑсӑр пуçна çухататӑн.

ИЛЮК. Эпӗ пелместеп те – кам пулӑшу

ИЛЮК. Ман пурӑнас килетха. Анчах Савтепипе пӗрле. Эп вилес пулсан та уншӑн çеç вилме хатӗр.

КАШКӐР. Апла эсӗ уншӑн хӑв пуçна хума та хатӗр пулсан сирӗн юратӑвӑр чӑнах та питӗ çирӗп. Çавӑнпа сана хам вӑйӑм çитнӗ таран пулӑшма пултаратӑп. Эп сана чун савнӑ хӗрне тупма пулӑшатӑп. Анчах ӑна çӑлма, Чике-Сухалран туртса илме хӑвӑнах вӑй хурас пулать.

ИЛЮК. Чӑнах та пулӑшма пултаратӑн-и? О-ой, Савтепине курма тӳр килет-ши? Çук. Хам мӗн илтнине хамӑн та ӗненес килмест. Эпӗ ухмаха тухатӑп пулмалла. Пулӑш мана, Кашкӑр тусӑм. Савтепине тупсан эп сана ӗмӗр хамӑн шӑллӑм вырӑнне хуráттӑм. Эп сана тархаслатӑп. Тархасшӑн, илсе кай мана Савтепи патне. Унта çитсен мӗнле çӑлмаллине куç курӗ.

КАШКӐР. Апла пулсан, итле. Чике-Сухал ман аслӑ пичче пулать. Ун асамçӑ вайӗ манӑнниччен вӑйлӑрах. Çавӑнпа эпӗ унпа çапӑçма пултараймастӑп. Темиçе çул ӗлӗкрех вӑл Тухатмӑш Карчӑкпа пурӑннӑ. Çав Карчӑк ман пиччене асамлӑ ӗçсем тума вӗрентнӗ. Каярахпа Чике-Сухал асамӗпе Карчӑк чунне илет. Ун хыççӑн пӗтӗм пурлӑхӗпе асамлӑ вӑй Чике-Сухала куçать. Вара вӑл çӗршыв тӑрӑх çӳресе пӗтӗм халӑха сӑтӑр тума, чипер хӗрсене хӑй патне вӑрласа кайса ирӗксӗрлесе хӑй арӑмӗ тума пуçларӗ. Çавӑн пек путсӗр ӗçсем тунӑшӑн эп ӑна янӑ. Тухатмӑш Карчӑк шӑпӑр утланса вӗçнӗ, Чике-Сухалӗпе. Вӑт, ырӑ çыннӑм, эп сана Чике-Сухал патне илсе çитерме пултаратӑп, анчах хӑвӑн хӗрне хӑвӑнах хӑтарма лекет.

ИЛЮК. Юрать. Эп апла та килӗшетӗп. Анчах илсе çитер мана ун патне.

КАШКӐР. Апла пулсан хӑвӑн мӗн пур япалуна пуçтар та каятпӑр. Ку карçинккана илме ан ман. Пирӗн çул питӗ вӑрӑм, темиçе хут та çимелле пулать.

ИЛЮК. Ман пурте хатӗр. Атя, утатпӑр.

КАШКӐР. Утса унта нихăçан та çитейместӗн. Ман çине лар та ик хӑлхаран тыт. Ас ту, ӳксе ан юл. Темиçе тинӗсокеан урлӑ вӗçетпӗр. Эп шутсӑр вӑйлӑ кайнӑ вӑхӑтра ӳксе юлсан, эп чарӑнса сан патна çаврӑниччен эсӗ тинӗс е океан тӗпӗнче пулатӑн. Пӗр минутра виçӗ пин çухрӑм каятпӑр. Ӑнлантӑн-и?

ИЛЮК. Юрӗ, ӑнлантӑм. Атя!

*Илюк Кашкӑр çине утланать те тапранса каяççӗ.*

**Чаршав.**

**Виççӗмӗш курӑну.**

*Пысӑк чулпа купаласа тунӑ саман. Унта кӗмелли алӑка пысӑк чулпах хупласа лартнӑ. Йӗри-тавра йывӑç. Йывӑçтӗмӗ хушшипе Чике-Сухалӑн керменӗ курӑнать. Чике-Сухал кӗрет те чул алӑка уçать.*

ЧИКЕ-СУХАЛ. Ну, эс унта вилмен-иха? Каллех чӗнместӗн-и? Кала халех: мӗн шутларӑн? Килӗшетӗн-и манӑн арӑм пулма? Çук-и? Э-э, эс татах чӗнместӗн-и? Эп сана халех калаçма вӗрентетӗп. *(Самана кӗрет те Савтепине сӗтӗрсе тухса алӑк умне пӑрахать).* Ну, кала хӑвӑртрах! Килӗшетӗн-и манпа е килӗшместӗн?!

САВТЕПИ. Вилсен те, чӗрӗлсен те сан арӑму пулас çук. Ман чун юратни пӗрре пур. Вилсен те хам юратӑва хампа пӗрле илсе каятӑп.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Апла сана хӗртнӗ пушмак та пулӑшмарӗ пулсан, хӗртнӗ тимӗр çӗлӗк тӑхӑнтартатӑп. Пуçна ӗнтсе çунтарса яратӑп, хама кирлине пур пӗр илетӗп. Эп виç çӗр хӗрӗх çичӗ çул пурӑнса сан пек кутӑн хӗр курман. Ну, юлашки хут ыйтатӑп: ман арӑм пулма сӑмах паратӑн-и е çук-и? Э-э-э, чӗнместӗн-и? Эп сана халех калаçтаратӑп! *(Тухса каять).*

*Кашкӑрпа Илюк кӗреççӗ.*

КАШКӐР. Акӑ питӗ вӑхӑтлӑ çитрӗмӗр. Ав, Савтепи выртать. Вӑл çав тери асаплантарнипе тӑнне çухатнӑ. Эс ун патне пыр та ӑна майӗпен тӑрат. Вӑл тӑнне кӗрсен Чике-Сухалпа мӗнле çапӑçмаллине хӑех калать. Ну, ӗçӳ ӑнӑçлӑ пултӑр. Кирлӗ вӑхӑтра манӑн ята асӑнсанах эпӗ килетӗп. *(Тухса каять).*

# 44-мĕш полкри трубач

В. МАРКОВ



### Тĕлĕк пулинех...

Ку пĕрре те вăраннă чухнехи пек мар. Хăрушă тĕлĕк малалла тăсăлни тесен тĕрĕсрех пулĕ. Çапла шухăшласа илчĕ Володя чи малтанах.

Хăйĕн салтак койки çинче мар, казармăра та мар, пачах та ют çĕрте урайĕнче выртать вăл. Казармăри мачча шурă, стенасем кăвак тĕслĕччĕ. Кунта вара мачча та, стенасем те курăнмаççĕ. Йĕри-тавраx – çăра тăман, вак кирпĕч тата пăчă та йывăр сывлăш. Казармăра унпа юнашарах юлташĕсем выртатчĕç, кунта вара никам та çук. Ӳпĕнтерне çĕтĕк минтерпе утиялă койкăсем çеç.

Çапла, ку тĕлĕк пулинех. Вăранма тăрăшмалла, йăлтах ĕнер сывăрма выртнă чухнехи пекех пулĕ вара. Володя хăйне чĕпĕтсе илчĕ. Ыратать иккен. Анчах нимĕн те улшăнмарĕ. Тĕтре çеç сĕвĕрĕлчĕ пек. Володя çĕкленесшĕн пулчĕ. Мĕн ку? Хăраса ӳкнĕ арçын ача аллине сăнарĕ: вăл чĕп-чĕр юн иккен. Çаврăнса пăхрĕ те казарма стенинчи пысăк шăтăка курчĕ...

Хăвăртрах тармалла! Юлташĕсен кĕлеткисем хушшипе асăрханса иртсе арçын ача алăк патне çитрĕ.

Çак самантра пуç çийĕнче темĕн хăлха хупланса лармалла кĕрĕслетрĕ. Маччаран штукатурка тăкăнма тытăнчĕ. Володя стена çумне лăпчăнчĕ. Стена хыçĕнче вара темĕн кĕмсĕртететет, сирпĕнет, çухăрать. Шăтăкран çулăм епле хыпса илсе сӳнни курăнать, çĕрпе чул катрамĕсем сывлăша фонтан евĕр çĕкленеççĕ...

Вăрçă! Епле ăнсăртран! Ĕнер каçхине кăна, ĕнер çеç лăпкăччĕ, питĕ лайăхчĕ... Çук, пулма пултараймасть!

### Ку – вăрçă!

Казармăран чупса тухсан Володя картиш витĕр кайрĕ те стена çумне лăпчăнса тулашри крепость хӳми патне çитме тăрăшрĕ. Хамăрăннисене курас, вĕсемпе кăштах та пулин сăмахлас килчĕ унăн. Ку чăнах та вăрçă пулсан винтовка илсе хӳтĕлевçĕсен ретне тăрасчĕ.

Эсĕ вун тăватă çул та тултарманни, хăвăн тантăшусенчен пĕчĕкрех пулни темех мар вĕт-ха. Урăххи пĕлтерĕшлĕрех – тăшмана çапса тăкма пĕлни. Ку ĕçе вара Володя аслисенчен кая мар пултарать. Юлашки вĕренӳсенче 44-мĕш полк командирĕ шăпах ăна тав сăмахĕ каларĕ-çке. Володя Казьмин трубач питĕ аван пĕчĕ.

Утать-ха арçын ача. Ун тавра вара снарядсемпе минăсем çурăлаççĕ, осколоксемпе пульăсем шăхăраççĕ. Тухăç фрончĕ енчен пулемет, автомат сасси илтĕнет. Унта тăшманпа хаяр çапăçу пырать, Володьăн полкĕ çапăçать. Çавăнта васкамалла.

Арçын ача самантлăха чарăнчĕ. Унăн çулне пепке çĕкленĕ хĕрарăм пӳлчĕ. Çӳçĕсем арпашăннă, çи-пуçĕ çĕтĕлнĕ, унта-кунта çуннă. Анчах Володьăна ку мар, унăн куçĕсем тĕлĕнтерчĕç, çав вăхăтрах хăратрĕç те. Çуннă ача çине пĕр хускалми пăхаççĕ вĕсем. Пепке вилнĕ. Хĕрарăм унсăр пуçне нимĕн те курмасть. Вăл такăна-такăна утать, ачине пĕр чарăнми темĕн пăшăлтатать...

Володя çурăмĕ тăрăх сивĕ чупрĕ, пырне йӳçĕ чăмакка ларчĕ. Куçĕ умне юлташĕсен асапланса пĕтнĕ кĕлеткисем, ытти салтаксен виллисем тухса тăчĕç. Вăл çирĕппĕнех ăнланчĕ: ку – вăрçă. Вилĕмлĕ, аркатуллă чăн-чăн вăрçă...

### Чĕррисем пĕрех парăнмаççĕ

– Ман хыççăн утăр!

Çак лăпкă та кăштах хăркăлти сасса илтнипе Володя шартах сикрĕ. Кĕтмен çĕртен пулчĕ вăл. Арçын ача çаврăнчĕ те автоматлă лейтенанта курчĕ. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн чупса вĕсем Тухăç фортне (крепоçăн вăйлă çирĕплетнĕ пайĕ) çитрĕç. Кунта хĕрӳ çапăçу пырать. Гитлеровецсем танксем хыçĕнче пытана-пытана тапăнаççĕ. Володя темшĕн пĕрне тимлĕрех сăнарĕ – имшерскер, çӳллĕскер, кĕмĕл пакунлăскер, шурă кокардаллă симĕс карттус тăхăннăскер. «Офицер», – мĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Володя красноармеецсем хушшине вырнаçса выртрĕ те карабинран печĕ. Лешĕ, вăрăмскер, аллисемпе хăлаçланса çĕр çине ӳкрĕ.

– Акă сана, тискер фашист! – хумханнипе чĕтрекен сасăпа каларĕ Володя, тепĕр нимĕçе пăшалтан тĕллеме тытăнчĕ. Ку та форта чупса çитмесĕрех çĕр çине тăсăлса выртрĕ.

«Танксене винтовка пульлипе чарайместăн пуль çав», – пăшăрханса шухăшларĕ Володя. Çавăнтах савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ: фашист танкĕ айĕнче çулăм хыпса илчĕ-çке, акă вăл çунать.

– Çапла кирлĕ вĕсене!

Пĕр минут иртрĕ, иккĕмĕш... Тепĕр танкне те çапла майпах чарчĕç. Виççĕмĕшне те. Ыттисем каялла çаврăнчĕç. Автоматçăсем те тарма тытăнчĕç.

Тапăну чарăнчĕ. Канса илмелли вăхăт. Анчах вăл нумая пымарĕ. Тăшман танкĕсем татах форт енне хускалчĕç, пулемет çатăртаттарма тытăнчĕ.

Салтаксем каллех çĕр çумне лăпчăнса выртрĕç, гитлеровецсем пĕрин хыççăн тепри ӳкме пуçларĕç. Атака каçчен те вĕçленмерĕ. Нимĕç командованийĕ хăйĕн салтакĕсене, танкĕсене, вăрçă хатĕрĕсене хĕрхенмесĕрех крепость хӳтĕлевне аркатса кĕме ĕмĕтленчĕ. Анчах май килмерĕ. Тепĕр кунне те, виççĕмĕшĕнче те, пиллĕкмĕшĕнче те крепоçе илеймерĕç вĕсем. Кивĕ стенасем ишĕлсе анчĕç, красноармеецсен йышĕ сахалланчĕ, çапах та чĕрĕ юлнисем пур-пĕрех парăнмарĕç.

### Госпиталь-пăрлăх, пăрлăх-госпиталь

Пĕррехинче Тухăç форчĕн хӳтĕлевçисен хушшинче пĕр хĕр курăнса кайрĕ. Вăл 44-мĕш полк трубачне шырарĕ.

– Эпĕ – трубач! – кăшкăрчĕ Володя.

Хĕр ăна полк командирĕн Гаврилов майорăн хушăвне пĕлтерчĕ: госпитале санитарсене пулăшма каймалла.

Тĕрĕссипе каласан, Володьăн фортран уйрăлас килмерĕ. Кунта вăл çар ĕçне хăнăхрĕ-çке. Çакăнтах ăна пурнăçра пĕрремĕш хут командир строй умĕнче тав сăмахĕ каларĕ. Анчах хушăва итлемеллех. Володя хĕр хыççăн госпитале кайрĕ.

Госпиталь хăрушсăр вырăнта ларать. Кунта бомба е снаряд лекме пултараймасть. Тухтăрсем те, санитарсем те хăрушсăрлăхра ĕçлеççĕ. «Çавăнпа мана та кунта янă, – кӳренсе шухăшларĕ Володя. – Пĕчĕкскере сыхламалла терĕç пуль...»

Аманнисем нумай. Пĕрисем аташса чупса çӳреççĕ, теприсем шăлпа шатăртаттараççĕ, виççĕмĕшĕсем пĕр хускалмасăр шăп выртаççĕ. Йывăр суранлисем вĕсем. Çăмăл аманнисенчен нихăшĕ те госпитальте чылайччен тытăнса тăмасть. Суранне çыхтарсан вăл чĕлĕм туртса ярать те винтовкине çĕклесе çапăçма чупать.

Аманнисем вара йышлансах пыраççĕ. Тухтăрсемпе санитарсем вĕсен суранĕсене çыхса та ĕлкĕреймеççĕ. Кунта вара пĕрисене ĕçтермелле, теприсене çитермелле.

Володя çакна курчĕ те унченхи кӳренĕвĕшĕн намăсланчĕ. Госпитальте питĕ кирлĕ-çке вăл. Унăн шухăшĕсене çирĕплетес тенĕн тухтăр сасси илтĕнчĕ:

– Пăрлăх ăçта вырнаçнине пĕлетĕн-и?

– Пĕлетĕп. Шалти купа айĕнче.

– Чуп. Унтан пăр тата аманнисем валли çимелли илсе кил. Асăрханулла пул. Çул çинче пуля тивме пултарĕ.

Çапла Володя аманнисене кирлĕ япаласемпе тивĕçтерекен пулса тăчĕ. Госпиталь-пăрлăх, пăрлăх-госпиталь. Çак маршрутпа вăл кунне темиçе те çӳрет. Пĕр енне – пушă



михĕпе, тепĕр енне – йывăр тиевпе пĕкĕрĕлсе. Унченхи пекех пуç çийĕн снарядсемпе минăсем шăхăрса иртеççĕ. Акă Володя мина çывăхра е инçетре ӳкессе сасăранах палăртма вĕренчĕ. Хăрушлăх çинчен шухăшлама вăхăт çук. Пăр тата çимелли нумай кирлĕ, анчах вĕсене илме çӳрекен çын Володьăсăр пуçне никам та çук. Вăл пĕтĕм вăйран тăрăшрĕ. Çурăмĕ чăтмалла мар ыратрĕ, урисем такăнма пуçларĕç, куçĕ умĕнче сарă çаврашкасем шуса иртме тытăнчĕç. Арçын ача вара утать те утать. Çапла кирлĕ, крепоçе хӳтĕлекенсем пурте çапла тăваççĕ – вăй-халне хĕрхенмесĕр çĕнтерĕве çывхартма тăрăшаççĕ.

### Икĕ сехет!

Пĕррехинче пăрлăхран таврăнсан Володя тĕп тухтăра хăй килсе çитнине пĕлтерчĕ те «сулахая-çаврăнса» командăна пурнăçласшăнччĕ, анчах çавăнтах ӳкрĕ.

Тухтăр ун умне пăлханса кукленчĕ, юн таппине тĕрĕслесен хурлăхлăн кулса илчĕ. Володя вилнĕ пек çывăрать. Халĕ хăлхи çийĕн тупăран персен те, пăрлă шывпа сапсан та усси пулмĕ – çывăрса тăрансан çеç вăранĕ вăл. Санитарсем арçын ачана асăрханса çĕклерĕç те госпиталĕн чи хӳтĕ кĕтесне илсе кайрĕç. Çывăртăрах...

Мĕн чухлĕ вăхăт хуп турттарнине пĕлмерĕ Володя. Анчах вăрансанах кĕлетки çăмăлланнине туйрĕ. Халĕ вăл каллех канмасăр ĕçлеме – пăр тата çимелли йăтма, форта кайса тăшманпа çапăçма – хатĕр, мĕн хушнине пĕтĕмпех пурнăçлĕ.

Арçын ача тĕп тухтăра çаплах пĕлтерчĕ:

– 44-мĕш пăшал полкĕн трубачĕ Владимир Казьмин службăна малалла тăсма хатĕр!

Тĕп тухтăр арçын ачан путса кĕнĕ куçĕсене тимлĕ сăнарĕ, кулса илчĕ те командир пек мар, темĕнле ăшшăн, ашшĕ пек, каларĕ:

– Акă мĕн, Вовка, çапла хушу паратăп сана: малтан лайăх çи, кайран икĕ сехет канма пултаратăн.

Икĕ сехет канмалла! Володя пĕр çакăншăн савăнчĕ темелле мар ĕнтĕ. Çак икĕ сехете вăл хăйĕн Тухăç фортĕнче карабинпа ирттерĕ. Госпитале лекнĕренпех ĕмĕтленсе пурăнни-çке ку. Кунта хăй питĕ кирлине туять пулин те чĕри çапăçу пынă çĕре чĕнет! Нимĕн те тăваймăн...

**(Малалли çитес номерте).**

*Вырăсларан Лариса ПЕТРОВА куçарнă.*

# Нинук тĕпелĕ

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## Пахча çимĕç хăпартăвĕ

**Хăпарту валли 8-9 çĕр улми, 1 кабачок, 4 пысăк помидор, 2 çăмарта, 50-70 грамм сыр, 2 апат кашăкĕ тип çу, кăштах тăвар, пăрăç, 1 ыхра шăлĕ кирлĕ.**

Çĕр улмине 20 минут пĕçермелле. Кабачока çемçеличчен шывра пăшăхламалла. Çимĕçсене тата виçĕ помидора вăтам татăксене вакласа çу сĕрнĕ формăна сийпе вырнаçтармалла. Тĕпне çĕр улми, унтан кабачок. Юлнă пĕр помидора хуппинчен тасатмалла та нимĕрлемелле. Вĕтетнĕ ыхрапа тата тăварпа пăтратмалла. Пулнă «соуспа» кабачока сĕрмелле. Ун çийĕн тураса хунă помидора, унтан çĕр улмине хумалла. Çиелтен пăрăçпа тата тăварпа лăканă çăмартана ямалла.

Формăна фольгапа витмелле, 200 градус таран хĕртнĕ духовкăна 35 минута лартмалла. Вăхăт иртсен кăларса теркăпа хырнă сырпа сапса тата 15 минут тытмалла. Градуса 160 çити чакармалла.

## «Ананаслă» салат

**Çимĕçе хатĕрлеме 1 кĕленче консервланă ананас, 1 тĕтĕмленĕ чăх пĕççи, 1 кĕленче консервланă куккурус, 50 грамм хытă сыр тата майонез кирлĕ.**

Какая тирĕпе шăмминчен уйăрса тăваткăлласа туратпăр. Сĕтеккене сăрăхтарнă ананаса та тăваткăлласа ваклатпăр. Сыра шултăра теркăпа хыратпăр.

Пĕтĕмпех хутăштаратпăр та куккурус унтан майонез хушса пăтрататпăр.  Салат хатĕр.

## «Берлин» салат

**Ку салат валли хăвăра кирлĕ чухлĕ çăмарта, пылак пăрăç, ветчина е кăлпасси, хăяр, сыр, майонез тата укроппа петрушка илĕр.**

Ветчинана, çăмартана, пăрăçа, хăяра тăваткăл-тăваткăл турăр. Сыра шултăра теркăпа хырăр. Укроппа петрушкăна та вĕтетĕр. Пĕтĕмпех хутăштарса майонезпа пăтратăр. Салат хатĕр те! Апачĕ тутлă пултăр!

## Пулă хăпартăвĕ

**Хăпартăва янтăлама 3 çăмарта, 1 кĕленче консервланă сайра е горбуша, 3-4 çĕр улми, 1 сухан, 250 грамм хăйма, çавăн чухлех майонез кирлĕ пулать.**

Малтан çăмартана майонезпа тата хăймапа пăтратса хумалла.

Çимĕçсене формăна сийпе çак йĕркепе хурăр: çавракан туранă çĕр улми, çурма çавракан каснă сухан, вĕтетнĕ пулă консервĕ. Унтан çăмартаран хатĕрленĕ хутăша ямалла. Çиелтен теркăланă сыр сапма пултаратăр. Çимĕçе духовкăна лартса çĕр улми пиçиччен тытмалла.

СИМĔÇ КĔТЕС

# Ӳсен-тăрана тĕрĕс пăхар

Кашни килте тенĕ пекех тĕрлĕ чечек ӳсет. Вĕсем пире хĕлле те, çулла та хăйсен илемлĕ çеçкисемпе илĕртеççĕ. Пӳлĕме ырă шăршă сараççĕ, сывлăша тасатаççĕ. Чечексене тăтăшах шăвармаллине, тăприне кăпкалатмаллине эпир пурте лайăх пĕлетпĕр. Анчах ку çеç çителĕксĕр. Тăпра пулăхне лайăхлатмалли çинчен те манмалла мар. Унсăрăн ӳсен-тăран хăрма, чирлеме пултарать.



Килте ешерекен чечексенчен пурте тенĕ пекех пылакрах шыва «кăмăллаççĕ». Уйрăмах кактуссемшĕн усăллă çакă. Шăварас умĕн тăпра çине 1 чей кашăкĕ сахăр сапма пултаратăр. Е çур стакан шывра çур чей кашăкĕ сахăр ирĕлтерсе шăварăр.

Çеçкене ларас  умĕн кастор çăвĕ хушнă шывпа (1 литра 1 чей кашăкĕ) шăварсан усăллă.

Цитрус йышши улма-çырла (апельсин, гранат, лимон) хуппинчен тата шывран хатĕрленĕ шĕвек те тăпрана тутлăхлатать. Çимĕçсен хуппине шывпа хутăштарса пĕр талăк тытмалла, унтан унпа усă курма юрать.

Пĕр чей кашăкĕ чухлĕ алоэ сĕткенне пĕр литр çурă шывпа хутăштарса шăварсан та аван.

Ӳсен-тăрана чир-чĕртен сыхлама аспирин пулăшать. Пĕр таблетка аспирина пĕр литр шывра ирĕлтерсе чечексене пĕрĕхĕр.

Фикусăн çулçисене сĕтпе йĕпетнĕ мамăкпа сăтăрсан вĕсем йăлтăртатĕç,  илемлĕрех курăнĕç. Çак чечеке те уйăхне пĕрре кăштах сахăр хушнă шывпа шăвармалла.

Пĕр литр шыва В12 витамина (1 ампула) ярса фиалкăсене шăварăр. Çакăн пек шĕвекпе вĕсене уйăхне икĕ хут тутлăхлатмалла.

Чечек лартас умĕн савăт тĕпне вĕтетнĕ банан хуппине хурăр. Унтан тăпра тултарăр. Çак çимĕç хуппи калийпе, магнийпе тата фосфорпа пуян. Ку ӳсен-тăрана лайăх ешерме пулăшĕ.

# Сĕнӳсем

***Хуçалăхра ĕçленĕ чухне çак сĕнӳсене шута илме ан манăр.***

◈Тутăхпа вараланнă тумтире лимон сĕткенĕ тата тăвар тасатма пулăшĕ. Вараланнă вырăна сĕткенпе йĕпетĕр те çиелтен тăвар сапăр. 1 талăк тытăр. Кайран тумтире чӳхесе илĕр.

◈Яшка кăштах тăварлăрах пулчĕ-и? Пĕр татăк сахăра кашăка хурăр та шӳрпене чикĕр. Сахăр ирĕле пуçласан кашăка кăларăр. Пылак ытлашши тăвара туртса илĕ.

◈Çавăн пекех пусмапа чĕркенĕ рис кĕрпине е çăнăха темиçе минут яшкара вĕретме юрать. Е хуппинчен тасатнă пĕр çĕр улмине ярса кăштах тытăр. Вара яшка тути сире кирлĕ пек пулĕ.

◈ Лавккаран туяннă япала çинче çыпăçтарса хунă хак е штрих-код тӳрех куçа тăрănать. Кун пек япалана парнелеме те аван мар. Çапла-и? Вĕсенчен çăмăллăнах хăтăлмашкăн япалана вĕрекен шыв çийĕн тытмалла та хута тӳрех хăйпăтмалла. Е çав тĕле фенпа вĕртерсе вĕрилентерĕр.

◈Апат пĕçернĕ чухне савăт хупкăчне хăвăр еннелле тытса уçмалла. Унсăрăн пăспа пиçме пултаратăр.

◈Плита умĕнче апат хатĕрленĕ чухне алла е пите асăрханмасăр пăспа пĕçертрĕр пулсан çав тĕле çăмарта шурри е супăнь сĕрĕр.

◈Сыра терка витĕр кăларнă чухне вăл ун çумне ан çыпăçтăр тесен ăна тип çупа сăтăрăр.

◈Пластмасс йĕпсесем авăнчĕç пулсан вĕсене вĕрекен шыва чиксе кăларăр та тӳрлетĕр. Унтан тӳрех сивĕ шывпа чӳхĕр.

ХАМĂР ХУШĂРА

# Сăн ӳкерĕнетпĕр

***Куç кĕскинче хамăра сăнанă чухне йăлтах тивĕçтерет пек. Анчах сăн ӳкерчĕксенче темшĕн апла мар. Вăл е ку çитменлĕх куç умне лекет те кăмăла пăсать. Ӳкерĕннĕ самантра йăлтах йĕркеллĕ пек туйăнатчĕ-çке.***




Сăн ӳкерчĕксенче илемлĕ те яштака пӳллĕ пулас тесен темиçе вăрттăнлăха пĕлни çеç кирлĕ.

1. Илемлĕ тумтир. Пĕр-пĕр мероприятие е ташă каçне кайнă чухне тумтире тимлĕх нумай уйăрмалла. Кашни пĕчĕк япалана пăхмалла, тĕрĕслемелле. Тулирех кĕлеткеллисен пĕр тĕслĕ çи-пуç суйласан аван.

2. Тĕрĕс ракурс. Сăн ӳкерĕннĕ чухне фотоаппарат пирĕн куçсемпе пĕр пек шайра пулмалла.

3. Янаха мĕнле тытмалла? Нумай чух сăн ӳкерчĕкре «иккĕмĕш янах» таçтан тупăнать. Апла ан пултăр тесен ӳкерĕннĕ самантра мăй мышцисене хытарăр, янаха кăштах маларах кăларăр. Кулнă чухне вара чĕлхене çӳлти шăлсем çумне лектерĕр.

4. Кĕлетке. Çăлтăрсен сăн ӳкерчĕкĕсене сăнанă-и? Пур çĕрте тенĕ пекех вĕсем кăкăра кăшт маларах каçăртнă, хăрах урине те маларах хунă. Çапла ӳкерĕннĕ чухне хыçалти ура çине таянăр. Кун пек ӳкерчĕкре кĕлетке те яштакарах курăнĕ.

5. Алăсем. Урасене пĕрне хыçала, теприне мала хурса хыçалти çине таяннă хыççăн алăсене пĕçĕсем çине хурăр. Е чавса тĕлĕнче кăштах хуçлатса икĕ айккинелле ярăр. Çурăма яланах тӳрĕ тытăр.

6. Прическа. Çӳçе ытла якатса пуçтарма ан тăрăшăр. Сăн ӳкерĕнме кăпăш прическа суйласан аван.

7. Ларнă чухне. Урасене пĕр пĕрин çине хĕресле хурăр. Кресло е тенкел  çурăмĕ çине таянăр. Е пукан хĕррине вырнаçăр та кăкăра кăштах малалла каçăртăр.

8. Урамра. Хĕвел çӳлте тăнă чухне сăн ӳкерĕнме сĕнместпĕр. Сулхăнра е кăнтăрла хыççăн çеç ӳкерĕнĕр.

9. Дистанци. Фотокамера тата ӳкерĕнекенĕн хушши ытла çывăх та, инçе те пулмалла мар. Мероприятие каяс умĕн куç кĕски умĕнче хатĕрленсен усăллă. Камера мĕн чухлĕ çывăхрах, эпир çавăн чухлĕ пысăкрах курăннине асра тытăр.

10. Кулă. Тĕрĕс йăл кулма пĕлни пур сăн ӳкерчĕке те илем кӳрет. Кулнă чухне шăлсене пĕтĕмпех кăтартма, «Сыр!» тесе кăшкăрма кирлĕ мар.

Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.

ҪӖНӖЛӖХ

# «Анне чӗри» юратупа тулли




*Анне, пурнӑҫ гимнӗ евӗр эсӗ,*
*Янра мӗн ӗмӗре, чыспа ҫутал.*
*Сана тивлетлӗ инҫетсем чӗнеҫҫӗ,*
*Сана кун-ҫул сунать телей, вӑй-хал.*

***Ю. Петров***

«Ашшӗ-амӑшӗ панӑ ырлӑха ывӑлӗ нихӑҫан та тавӑрса пӗтереймест», – тенӗ ваттисем. Ку сӑмахсемпе килӗшмесӗр май ҫук. Ара, ачисене ура ҫине тӑратас тесе хӑйсене шеллемесӗр ырми-канми тӑрӑшать ашшӗ-амӑшӗ. Ҫавӑнпах хырӑм та тутӑ, ҫи те питӗ, чунра та савӑнӑҫ йӑва ҫавӑрать. Ҫапла ҫав, ӑҫта юрату – унта ҫутӑ, ӑҫта анне – унта ӑшӑ.

Кӑҫ умне Алексей Балакаевӑн «Сердце матери» (Экин зуркн) драмӑлла фантазийӗ тӑрӑх лартнӑ спектаклӗнчи Амӑшӗн сӑнарӗ (Калмӑк Республикин халӑх артистки Любовь Лазарева) тухса тӑрать. Ырӑ кӑмӑллӑ та вӑр-варскер, ҫепӗҫ пуплекенскер... Пюрвя ятлӑ ывӑлӗпе (Калмӑк Республикин тава тивӗҫлӗ артисчӗ Санджи Пурсяков) унӑн савнийӗ Манджя (Эльза Бембеева) еплерех хавхаланса вылянине, ахӑлтатса кулнине сӑнанӑ май вӗсемшӗн чунтан хӗпӗртет. Йӑлтах йӗркеллӗ пек. Тулӗк хуйхӑ-суйхӑ систермесӗр ҫӳрет. Пач кӗтмен ҫӗртен татӑлса анать инкекӗ.

Усал сывлӑш Шарка (Калмӑк Республикин тава тивӗҫлӗ артистки Гилян Бембеева) ятлӑ тухатмӑш пек йӑпшӑнса килет те Пюрвя пуҫне ҫаврать. Йӗкӗте тек нимӗн те кирлӗ мар. Шарка пирки ҫеҫ шухӑшлать вӑл. Унпа тӗл пуличчен мӗнлерех пурӑннине пӗтӗмпех тенӗ пек манать е пӑтраштарать. Манджяна вуҫех палламасть. Качча сыватмалли эмеле тупса килме Амӑшӗ ырӑнне савнийӗ ҫула пуҫтарӑнать. Тӗрлӗ тӗрӗслевпе йывӑрлӑх витӗр тухма тивет унӑн. Пурпӗр парӑнмасть харсӑр пике. Юратнӑ ҫыншӑн вутра ҫунма та, усалпа тытӑҫса ҫапӑҫма та хатӗр вӑл.

Тулӗк шӑпаран шыва сиксе те хӑтӑлаймӑн. Пюрвя ҫаплипех Шаркашӑн ҫунать. Паллах, ывӑлӗ канӑҫсӑрланнине, хӑйне валли ырӑн тупайманнине Амӑшӗ те туять. Ачисен чунӗнчи пӗчӗк улшӑнӑва та сисет-ҫке-ха унӑн чӗри. «Ача макӑрать – амӑшӗн кӑкӑрӗ ыратать», – тесе ахальтен каламан халӑхра.

Йӗкӗтӗн тунсӑхне вара нимӗн те сиреймест. Ҫакна пӗлекен Шарка яшпа хӑйне майлӑ усӑ курма шут тытать. Малтанах вӑл ӑна Ҫеҫен хир хуҫине (Сергей Адьянов) вӗлерме хушать. Ырӑ хӑватлӑскер унӑн тӑшманӗ-ҫке-ха. Телее, ӗҫ тухмасть. Пурпӗр хӑпмасть каччӑран тухатмӑш. Ӗмӗрех чипер те ҫамрӑк пулас тӗллевлӗскер Пюрвяран Амӑшӗн чӗрине парнелеме ыйтать. Яш иккӗленет, килӗшмест, ҫапах та юлашкинчен парӑнать. Амӑшӗ те ӑнланать: иртнӗ савӑк вӑхӑта ниепле те, ним тусан та тавӑраймӗ вӑл. Ывӑлӗ те хӑйӗн пурнӑҫне Шаркасӑр курмасть. Ҫавӑнпа хӑй ирӗкӗпех хӗрӳллӗ чӗрине кӑларса парать хӗрарӑм...

Ку спектакль ҫитӗнекен ӑрушӑн асӑрхаттару пек янӑрать. Ҫамрӑксем хӑйсен ӗмӗчӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн тепӗр чухне кӑмӑл-сипет, тивӗҫлӗх, чыслӑх пирки пачах манаҫҫӗ. Ҫав шутра – ашшӗ-амӑшӗ умӗнчи парӑм пирки те. Тав тӑвас вырӑнне тӳнтерле ӗҫпе е сивлек сӑмахпа тавӑраҫҫӗ. Анчах телее ҫапла майпа туптамаҫҫӗ. Тӑванлӑх туйӑмне аркатса, ӑш пиллӗ хутшӑнусене татса ӑраскаллӑ пулаймӑн.

Спектакль тарӑн шухӑша ярать. Сӑнарсем ҫут ҫанталӑкпа тачӑ ҫыхӑнура пурӑнаҫҫӗ. Тавралӑха упрасси, аслисене сума сӑвасси йӑлара. «Пур япалан та чикки-вӗҫӗ пур», – текен шухӑш ҫирӗпленет ӑс-тӑнра. Савӑнӑҫ хурлӑхпа ылмашать, анчах вӑл та ӗмӗрӗпех хуҫаланмӗ. Геройсен калаҫӑвне калмӑк сӑмахӗсене кӗртсе яни питех те интереслӗ. Куракана урӑх чӗлхепе паллашма май парать ку.

Драмӑлла фантази режиссерӗ – Раҫҫей Федерацийӗн тата Калмӑк Республикин искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Борис Манджиев, ӳнерҫи – Саглара Чулкаева, композиторӗ – Гиляна Манджиева. Спектакль пирвайхи хут куракан умне 2008 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 21-мӗшӗнче тухнӑ. «Пинк Флойд» ушкӑн композицийӗн сыпӑкӗсемпе усӑ курни, халӑх юррине кӗртсе яни пур ӳсӗмри куракана та кӑсӑклантармалла. Вӗсене пӗр спектакльте ҫыхӑнтарма пултарни хӑех интереслӗ. Режиссер тупнӑ ытти мелсем те яш-кӗрӗмшӗн ӑнланмалла: Пюрвя ӑс-тӑнне пӑтратакан наркотик тӗтрелӗхӗ, пирус тӗтӗм-сӗрӗмӗ, юрату сценисем, хӑйне евӗрлӗ тумюм... Сценӑна йӗркелекен япаласемпе вӗсене хатӗрленӗ материала та ӑнсӑртран суйламан. Хура е витӗр курӑнакан полиэтилен анлӑшӗсем пӗрре тюльпан хирӗ, тепре сарлака ҫул пулса тӑраҫҫӗ. Синтетикӑпа полимер тӗнчинче пурӑнакан паянхи ӑрӑва кирлӗ пек витӗм кӳретех ку.

Ӳнерҫӗ те тӗссемпе пӗлсе, вӗсене символла пӗлтерӗшпе пуянлатса усӑ курать. Малти планра – хурапа шурӑ, ырӑпа усал кӗрешӗвӗ. Ҫавӑн пекех хура, хӗрлӗ тӗссем те хумахантармасӑр хӑвармаҫҫех. Вӗсем илӗртӳллӗ, илемлӗ, анчах ҫылӑхлӑ сӗмпе тухса тӑраҫҫӗ пирӗн ума. Шурӑ тата хура тум тӑхӑннӑ сӑнарсем пӗр вӗҫӗм пӗр-пӗринпе хутшӑнни ҫут ҫанталӑкри ырӑпа усал кӗрешӗвне, ар тата ама енсем тӗл пулнине сӑнарлать.

Анне чӗри канӑҫсӑр та хӗрӳллӗ. Вӑл яланах ачисемшӗн пӑшӑрханать. Анне чӗри юратупа тулли. Вӑл хӑйшӗн тӑрӑшмасть. Анне чӗри – Ҫӗр ҫинче чи хакли. Вӑл упрать, ӑнланать, каҫарать. Ывӑлӗсемпе хӗрсем, мӗнпе тавӑрӑпӑр-ха эпир ку парӑма?

***Спектакле***
***Ольга АВСТРИЙСКАЯ курнӑ.***

САВӐНӐҪ

# Гастроль, форум, фестиваль...



**Юпа уйӑхӗ Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх Ҫамрӑксен театрӗшӗн чӑнах та питӗ тухӑҫлӑ та кӑсӑклӑ иртрӗ-тӗр. Уйӑх пуҫламӑшӗнче чӑваш артисчӗсем Калмӑк Республикинче гастрольте пулчӗҫ. Куракансене «Один дома» (Ирина Широбокова), «Собаки» (Константин Сергиенко, Станислав Васильев), «Суя пурнӑҫ» (Маргарет Мэйо, Морис Эннекен), «Тӑм тивнӗ чечексем» (Зинаида Долгова) спектакльсемпе паллаштарчӗҫ. Калмӑксем пирӗн артистсен вылявне, ӑсталӑхне пысӑка хурса хакланӑ.**

Нумаях пулмасть вара Калмӑк ҫӗрӗнчи Б.Басангов ячӗллӗ Наци драма театрӗн труппи пирӗн республикӑмӑра килсе кайрӗ. Пӗчӗккисене те, ҫитӗннисене те тӗрлӗ спектакльпе савӑнтарчӗ. Акӑ вӗсем: «Араш», «Сказки Белого Месяца», «Сердце матери». Пилӗк кун хушшинче Шупашкар куракансене кӑна мар, республикӑри ытти хулари халӑха те тӗлӗнтерме ӗлкӗрчӗҫ артистсем. Канаш, Ҫӗмӗрле тата Ҫӗнӗ Шупашкар хулисене ҫитрӗҫ вӗсем.

«Сказки Белого Месяца» спектакльти ӗҫ-пуҫ ҫуркуннен пӗрремӗш кунӗнче, ҫулсерен иртекен Цаган Сар (Шурӑ Уйӑх) уявӗ вӑхӑтӗнче пулса иртеҫҫӗ. Тӗп сӑнар – юратнӑ ӗнине шырама тухнӑ арҫын ача. Ку чӑн-чӑн ҫул ҫӳреве ҫаврӑнать. Ача халӑх юмахӗсенчи геройсемпе тӗл пулать, Цаган Сар праҫникӗнче хӑйне евӗрлӗ ташӑсемпе вӑйӑсем курса, юрӑсем итлесе килелет. Телее, маларах палӑртнӑ тӗллеве пурнӑҫлатех арҫын ача.

Спектакльти ӗҫ-пуҫа куракансене те хутшӑнтарни пушшех интереслӗ. Вӗсем калмӑкла шутлама вӗренеҫҫӗ, ҫавӑнтах чӗр чунсемпе кайӑксен ячӗсем икӗ чӗлхере еплерех янӑранине илтсе танлаштарма пултараҫҫӗ. Ҫитӗннисем валли лартнӑ спектакльсенче кӗлӗ тата юрату сӑмахӗсене калмӑкла калаҫҫӗ. Вӗсем пуриншӗн те ӑнланмалла-тӑр. Мӗншӗн тесессӗн вӑл е ку лару-тӑрура кашниех мӗн калассине палла.

«Араш» вара чӑн-чӑн реквием пек пулса тӑрать. Пӗр ҫемье шӑпи урлӑ мӗнпур калмӑк халӑхӗн трагедине кӑтартма пултарнӑ кунта. 1943 ҫулхи хӗлле вӗсене Ҫӗпӗре ӑсатнӑ, еплерех терт-нуша витӗр тухма тивнӗ кашниннех...

Ҫак кунсенчех Ҫамрӑксен театрӗнче ача-пӑча наци драматургийӗн лабораторифорумӗ ӗҫлерӗ. Ку проект «Раҫҫей культури (2012–2018 ҫулсем)» программӑпа килӗшӳллӗн Раҫҫей Федерацийӗн Культура министерствин грантне тивӗҫнӗ. Форум ертӳҫи – паллӑ театр критикӗ, искусствоведени кандидачӗ Ирина Мягкова. Экспертсен йышӗнче Раҫҫей Федерацийӗн искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Валерий Персиков режиссер, Сергей Фишер театр критикӗ пулнӑ. Мероприятие хутшӑнакансенчен чылайӑшӗ – Чӑваш, Пушкӑрт Республикисенчен, Екатеринбург, Мускав, Санкт-Петербург хулисенчен.

Пьесӑсене вуланӑ ҫӗре Ҫамрӑксен театрӗн артисчӗсем те хутшӑннӑ. Хак панӑ, сӳтсе явнӑ хайлавсен шутӗнче: Светлана Лаптевӑн «Небесные звонари» (Беларусь Республики), Михаил Сунталӑн «Тӑм чӗлхе», Виктория Дергачевӑн «Снег», Алексей Альфонсӑн «Ҫемье» (Чӑваш Республики) пьесисем. Наци спектаклӗсен фестивальне Калмӑк Республикинче Б.Басангов ячӗллӗ Наци драма театрӗ хутшӑнни пушшех те паха.

Асӑннӑ мероприятисем артистсемшӗн те, ҫыравҫӑсемшӗн те, куракансемшӗн те усӑллӑ пулни каламасӑрах паллӑ. Пӗр-пӗрин опычӗпе паллашни, ӑна ӑша хывни малалла талпӑнма, аталанма пулӑшать-ҫкеха. Ҫамрӑксен театрӗ вара яланах пурнӑҫпа тан утать. Ҫак ҫул ҫинче ӑна ӑнӑҫу, ҫӗнӗ вӑй-хал сунас килет.

***Ольга ИВАНОВА.***

# Хаваслă 2014 самант

## Çула тухман – Уй курман...

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | 10 | 9 | 24 | | 21 | 20 | |
| 6 | 8 | | 23 | 25 | | 18 | |
| | | ♔ 1 | 14 | | | 59 | 57 |
| 4 | 2 | 13 | 15 | 27 | 60 | | 56 |
| 3 | 30 | | | | | 50 | |
| 31 | | 29 | | | 62 | | 51 |
| | 34 | | 47 | 41 | | 63 | |
| 33 | 36 | 35 | | 45 | 42 | | 64 |

**Ăнлантарни:** Туссем, атьăр-ха пĕр пулар, тĕрĕс çулпа утар, ун вĕçне тухар! Çавăнпа та, 1-мĕш клеткăран тытăнар та, 64-не çитсен ана вĕçĕнче ларса канар...

## Сăмах касмăш



**Сылтăмалла:** 3. Пулас генерал. 4. Сăвăçсен сăрт-ту вырăнĕ. 8. Чăваш апачĕ. 11. Ăна пуйăс сĕтĕрет. 12. Пĕчĕк жираф. 13. Кĕвĕ хайлавĕ. 16. Финиш мар. 17. Çĕр сийĕ. 18. Самолетсен сарайĕ. 19. Килькапа анчоус юлташĕ. 24. Вăрманти вĕçен кайăк. 25. Пахча çимĕç. 26. Вăхăт палли. 29. Ун чăххи сар çăмарта тунă тет. 30. Республикăри "йĕплĕ, шăллă" журнал. 31. Тĕнчипе паллă комик – Чарли ...

**Аялалла:** 1. Урана тăхăнмалли хатĕр. 2. Каласан та, каламасан та – ... 3. Ĕлĕкхи тумтир. 5. Сахăр евĕрлĕ пуш хир. 6. Тапăну. 7. Армак-чармак, пÿрте кĕмест (туп.юм.). 9. Вĕçкĕн. 10. Физкультурник. 14. Унта çăнăх авăртаççĕ. 15. Вăл çерçи мар. 20. Чÿрече пайĕ. 21. Хими элеменчĕ. 22. Шурлăхри вĕçен кайăк. 23. Чăваш сăвăçĕ. 27. Кун. 28. Шкул ачин арчи.

*Географи те истори,*
*Куçкĕрет экзамен турĕ.*
*Сăвăлла кашни ыйту,*
*Хуравне кĕтет – ас ту!*



1. Вальс янăрать унта ялан,
 Ун çеммипе эс çаврăнан.
2. Таçта пулсассăн та мадъяр,
 Хăвăн ятна нихçан ан яр!
3. Çав çĕр-шывра пурăнать,
 Вăрăм Томас çĕр касать.
4. Икĕ енлĕ кĕрĕк-мĕн,
 Тĕп хулинче сĕннĕ-мĕн...
5. Ăста выляççĕ футболла,
 Бразилирен те кулмалла.
6. Унта çуралнă теççĕ мода,
 Апла çырас хальхаççăн ода.
7. Те юрă ку, те чăн та юмор,
 Тĕп хули çийĕн çунă çумăр.
8. Кăткă евĕр унта халăх,
 Çĕр çитет-ши пурăнмалăх?

**Асăрхаттарни:** Хуравĕсене тĕрĕс тупсассăн, палăртнă йĕркере тепĕр ыйту сиксе тухать:

**"Унта кăна-çке кенгуру", –**
**Систерчĕ вăрттăн çеç гуру.**

## Сăмах касмăш



**Сылтăмалла:** 1. Тинĕсре те ишет, уçлăхра та вĕçет. 4. Тумтир эрешĕ. 7. Лашан урăхла ячĕ. 10. Балти тăрăхĕнчи халăх. 11. Кĕвĕ хайлавĕ. 12. Кишĕрти «эмел». 13. Хуралтă пайĕ. 16. Класра çакăнса тăракан хăма. 19. Вăрман «патши». 20. Сăвăçсен юратнă вырăнĕ. 22. Кивçене «панă» тавар. 24. Ăна фотограф лайăх чухлать. 26. Минерал. 27. Талăк. 28. Пÿрт пайĕ. 31. ... хурăн. 34. Колба, мензурка, ... 35. Пулас тырă. 36. Кăлпасси. 37. Хура тинĕсри дельфин. 38. Сехет пайĕ. 39. Мăнтăр калта.

**Аялалла:** 1. Пĕчĕк кĕреçе. 2. Статор «юлташĕ». 3. Çар техники. 4. Хаклă йышши чул. 5. Грексем ăна çÿлелле пенĕ. 6. Тапăну. 8. Тутлă пулă. 9. Вырăн хатĕрĕ. 14. Чиновниксен штачĕ. 15. Хваттере «янă» хурт-кăпшанкă. 17. Унта палан писет. 18. Тухтăрсен ĕç хатĕрĕ. 21. Шурлăхри сиплĕ курăк. 23. Вăтам Азири крепоç. 25. Çурăм хыçĕнчи шинель. 26. Вăл йĕркене Махно килĕштернĕ. 28. Укçа хутаççи. 30. Ту таки. 31. Литература жанрĕ. 32. Тăван унпа писнĕ. 33. Ÿсен-тăран.

***Николай КРАСНОВ** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.***